П91

В.Н. ПУШКИН

# *ЧӐВАШ ОЧЕРКӖ*

Национальная библиотека ЧР
4-040274

АБОНЕМЕНТ

В.Н.ПУШКИН

# *ЧĂВАШ ОЧЕРКĔ*

(Аталану–шырав çул–йĕрĕ

*XX ĕмĕрĕн 70–мĕш çулĕсем)*

Шупашкар

2004

УДК 821.512.111.0
ББК 83,3 (2 Рос-Чу)
П 91

ДАРСТВЕННЫЙ ЭКЗ.

Чăваш Республикин вĕренӳ министерстви пичете сĕннĕ

ПРОВЕРЕНО 20__ 21 МАР 2017

*Алçырăвне вуласа хак паракансем:*
Филологи наукисен докторĕ **Ю.М.Артемьев** профессор
Филологи наукисен докторĕ **Г.И.Федоров** профессор
Истори наукисен кандидачĕ **И.Я.Тенюшев** доцент
"Чăваш чĕлхипе литератури учительницисем **А.Н.Авинова, Е.М.Захарова**

Наука редакторĕ – филологи наукисен кандидачĕ, наука аслă сотрудникĕ **В.П.Никитин доцент**

*Вĕренӳ пособинче чăваш очеркĕн паянхи тăрăмне ăнланма унăн ĕнерхи сăн–сăпатне, иртнĕ вăхăтри тырав çулне–йĕрне, çитĕнĕвĕсемпе çитменлĕхĕсене XX ĕмĕрĕн 70–мĕш çулĕсене шута илсе кĕскен пăхса тухнă.*

*Çак ĕç пулас журналистсемшĕн çеç мар, учитель професне алла илес текен филолог-студентсемпе чăваш литературине, культурине пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкулсенче, лицейсенче, гимназисенче, тухникумсенче, аслă вĕренӳ заведенийĕсенче вĕрентекенсемпĕн те, вĕренекенсемшĕн те усăллă пулĕ.*

© Пушкин В.Н., 2004
© Чувашский республиканский институт образования, 2004

Ч-40274
НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

# 1. ИЛЕМЛĔ ПУБЛИЦИСТИКĂПА ОЧЕРК ЫЙТĂВĔСЕМ

Çĕнетӳ тапхăрĕнче литературăн обществăри вырăнĕ пирки, унăн пурнăçа лайăхлатас, çитменлĕхсемпе кĕрешес ĕçри пĕлтерĕшĕ пирки ыйту çивĕч тухса тăчĕ. Çĕнйĕркелӳн хăш–пĕр ырă витĕмĕ хăйĕн малтанхи тапхăрĕнче пурнăçа самаях уçă сывлăш вĕрсе кĕртрĕ. Çак пулăм нумай нациллĕ Раççей литературин пултаруллă вăйĕсене тăлласа тăракан чаруллă йĕркесене сирсе пăрахма чылаях май кӳчĕ. Халăхăн общество пурнăçĕнчи пуçарулăхĕ нумай хут ӳсрĕ. Çĕршывăн иртнĕ кунçулне, унăн тĕрлĕ тапхăрĕнчи киревсĕр пăрăнăвĕсене тишкерсе ăнланасси, политикăпа экономика пурнăçне, кăмăл–сипете кризис пулăмĕнчен тасатасси, çĕршыври нацисем хушшинче тĕрĕс хутшăнусем йĕркелесси, тăван чĕлхесемпе культурăсене пĕтсе ларасран сыхласси, экологи пăтăрмахĕсенчен çăлăнасси, чăн–чăн правалăх государствин никĕсĕсене хывасси тата ытти нумай ыйтусем литературăн чи çивĕч, вăраха ямасăр çутатса, татса памалли ыйтăвĕсем пулса тăчĕç. Ку ĕçе чăваш çыравçисем те – писательсем, журналистсем, культура ĕçченĕсем хастар хутшăнчĕç. Уйрăмах публицистика жанрĕсен илемлĕ литературăри, журналистикăри виçипе тӳпи нумай ӳсрĕ. Çавна май шкул учителĕ умне те тăван литературăна, унăн чĕрĕ пурнăçри активлă пĕлтерĕшне тĕрĕс вĕрентес–аталантарас тĕллев çĕнĕлле, питĕ çивĕч тухса тăчĕ. Ачасен, çĕнĕ Раççейĕн пулас гражданĕсен шыравлă ыйтăвĕсем те тарăнланчĕç; ĕнтĕ вĕсене текех пĕр–пĕр писателĕн биографин çĕн факчĕсемпе, пултарулăх çулĕн сыпăкĕ-пăрнăçĕсемпе паллашни кăна тивĕçтермест. Вĕсем çыравçăн халăх кĕрешĕвĕнчи, пурнăç хури–шурринчи вырăнне, унăн пуçарăвне курса ăнланасшăн. Геройсене те ĕлĕкхилле – сивĕ

тĕкĕр майлă сăнарланă виçепе мар - çĕнетӳ виçипе хакласа йышăнасшăн паянхи çамрăксем. Е герой тивĕçтермесен, ун пек сăнарсене сирсе пăрахасшăн.

Хальхи вăхăтра илемлĕ литературăпа журналистикăра илемлĕ публицистикăпа илемлĕ очерк хăйне майлă вырăн йышăнаççĕ. Çавăнпа та хамăр ĕçре вĕсен паллисем çинче те кĕскен чарăнса тăрăпăр. Паллах, очеркăн паянхи тăрăмне ăнланма унăн ĕнерхи сăн–сăпатне, иртнĕ вăхăтри шырав çулĕсене, çитĕнĕвĕсемпе çитменлĕхĕсене те пĕлмелле. Çавăнпа та çак ĕçре чăваш очеркĕн историне, иртнĕ ĕмĕрĕн 70–мĕш çулĕсене шута илсе, кĕскен пăхса тухнă.

Чăваш илемлĕ публицистикин çул–йĕрĕ еволюцийчченех пуçланнă. Унăн ырă тĕслĕхĕсене эпир «Хыпар» хаçатрах куратпăр. Паянхи литература, прессăра илемлĕ публицистика жанрĕсем пысăк вырăн йышăнаççĕ, ăнăçлă аталанса пыраççĕ пулин те вĕсене ятарлă, системăллăн тĕпчемен–ха.

Хальхи вăхăтра илемлĕ публицистика йтăвĕсемпе кăсăкланас туртăм Европăри ученăйсемпе вырăс литературипе журналистикине тĕпчекенсем хушшинче ӳссех пырать. Центрти пичетре çеç мар, хамăр чăвашра та çак ыйтупа çырнă ĕçсем, хушăран çеç пулсан та, юлашки вăхăтра курăнкалама пуçларĕç.

Публицистика ыйтăвĕсем пирки творчествăлла дискуссисем ирттересси те çыравçăсем хушшинче тахçанах йăлана кĕчĕ. 1977 çултах Будапешт хулинче СССР тата Венгри публиисчĕсем тĕл пулнăччĕ. Унта «Очерк и публицистика на переднем крае социалистического строительства. Исследования современности, вторжение в жизнь» темăпа икĕ кун çав тери хĕрӳ, тарăн калаçусем пулса иртрĕç. Ку ĕçĕн тымарĕ тата та маларахри çулсенчех вăй илсе тĕрскленчĕ. Очерк жанрĕпе ĕçлекенсен хушшинче тĕрлĕрен конкурссемпе ăмăртусем ирттересси совет çулĕсенче чылаях вăй илнĕччĕ.

«Литература хаçачĕ иртнĕ ĕмĕрĕн 70–мĕш

çулĕсенчех çав вăхăтри çынсем çинчен çырнă очерксен конкурсне ирттерчĕ. Çав вăхăтра илемлĕ публицистика çыракансен те, пичетленнĕ хайлавсен шучĕ те çулран çул ÿссех пычĕ. Çĕршыври нумай–нумай журналсенче, çав шутрах хамăр республикăри илемлĕ литература журналĕсем «Ялавпа» «Тăван Атăлта» та «очеркпа публицистикăн» ятарлă пайĕ пулнă. Çак ярăмпа СССР писателĕсен Союзĕ çулталăкне 200 ытла тĕрлĕрен кĕнеке кăларса тăнă. Чăваш кĕнеке издательствинче те 70–мĕш çулсенче очерк кĕнекисем пичетлесех тăчĕç: «Малтисем», «Шуршăлсем», «Кай енче», «Пурнăç кĕвви», «Пурнăç таппи», «Самана» т.ыт.те. Унсăр пуçне ял хуçалăхĕнче малта пыракансем çинчен 1973 çултан пуçласа «Пучах» ярăмра кашни çулах очерксен пуххи пичетленсе тухрĕ. Нумай çул журналистикăра вăй хунă Георгий Краснов писатель аса илнĕ тăрăх иртнĕ ĕмĕрĕн 70–мĕш çулĕсенчех: "Очерк чăваш литературинче пысăк вырăн йышăнмалла тесе çĕр çула яхăн калаçнă". Ун чухнех: "Писательсен пур пухăвĕ те очерк çырма, унăн пахалăхне ÿстерме, çивĕчлетме кирли çинчен калаçмăсăр иртмен пулĕ. Очерк çырман пĕр писатель те юлман. Прозаик та, поэт та, драматург та очерксем çырнă. Нумайăшĕ хăйĕн писатель шăпине те очерк çырнинчен пуçланă". Малалла паллă писатель 20-30–мĕш çулсенчех очерксăр "Сунтал" журнал е "Трактор" альманахăн пĕр номерĕ те тухманнине палăртать. Чăваш писателĕсем Тăван çĕршыв çитĕнĕвĕсене вулакана кăтартса парас шутпа 20–мĕш çулсен вĕçнеллех таçта та çитсе курнă. Хăйсем курни çинчен вĕсем илемлĕ очерксенче çырса кăтартнă. Çак пулăма Г.Краснов хăйĕн "Мĕн вăл илемлĕ очерк" статйинче малалла хăй те очеркист ăсталăхĕпе çапла çырса кăтартать: " Очерк çырас шутлă чăваш писателĕсем тĕве çине утланса вĕри пушхир урлă Алма–Атана, Ташкента, Ашхабада пырса кĕнĕ, çав тĕллевпех поляр ункин леш енне каçса кайнă,

тайга тăрăх аташса çӳренĕ, ытти материксене çитнĕ, самолетпа Лăпкă океан урлă вĕçсе каçса Кубăна лекнĕ, Пекин урамĕсемпе çуран утса çав хула варрине ӳкерсе илнĕ, Чăвашрадио корреспонденчĕн удостоверенийĕпе А.Г.Николеав иккĕмĕш хут тĕнче уçлăхне улăхсан, иллюминатор витĕр çĕр чăмăрне пăхса çаврăннă, тепĕр чăваш тата, Изотов хушаматлăскер, Петĕр Хусанкайпа пĕрле яш чухне сăвăсем çырнăскер, Çĕр чăмăрĕн экваторне виçнĕ вăхăтра та очерк çырма ĕмĕтленме пăрахман..." ("Тăван Атăл", 2003 №3). Ку ĕç аслă çĕршыв – СССР саланса кайичченех пычĕ.

Публицистика хайлавĕсене халăх яланах юратса вуланă, хисепленĕ. Çакна С.Смирновăн «Брестская крепость», Ю.Смуулăн «Ледовая книга», В.Песковăн «Шаги по росе» публицистика кĕнекисем вăл вăхăтри Ленин премине илме тивĕçлĕ пулни те аван çирĕплетсе парĕ. 70–мĕш çулсенче чăваш публицисчĕсем те хисеп шайĕнчен пахалăх çӳллĕшне хăпарса пыни аван сисĕнчĕ. Шел пулин те, çак жанра çӳле çĕклес ĕçре вăл çулсенче тĕпчевçĕсемпе критиксем тимлесе ĕçлени сисĕнмерĕ. Çак туртăм пурри паян та туйăнмасть. Публицистикăна тĕпчесе тунă пысăк пĕтĕмлетӳсем паян кун та çук–ха. Пĕтĕмлетсе сăнани – пĕрремĕш утăм пултăр. Çав утăма пусас тесе шутлать ĕнтĕ çак тĕпчевĕн авторĕ.

Литература пĕлĕвĕпе журналистика наукисенче мĕн вăл публицистика текен ыйту тавра хĕрӳ тавлашусем тахçантанпах пыраççĕ, вăл халь те тăсăлать. Тавлашăва хутшăнакан ăсчахсем, критиксем, журналистсем çак ăнлав пирки хăйсен шухăшне калаççĕ. Тӳрех палăртас пулать, нумайĕшĕн шухăшсем пĕр килмеççĕ, мĕншĕн тесен çак ыйтусене кашни хăй майлă ăнланать. Пĕрисем калană тăрăх, хаçатра мĕн пичетленни, эфира мĕн саланни – пурте публицистика иккен. Теприсем вара пулса иртекен ĕç çинчен илемлĕх мелĕсемпе усă курса, пулăмсене сă-

нарлă уçса панă хайлавсене çеç публицистикăллисен шутне кĕртеççĕ. Виççĕмĕшĕсем иккĕмĕшсене хирĕçлесе: «Илемлĕх мелĕсемпе усă курса ӳкерчĕклени публицистикăра кирлĕ мар, ун пек япаласемпе очерк, фельетон, памфлет çырнă чухне çеç усă курас пулать», - теççĕ (В.В. Ученова, М.С. Черепахов).

Çак тавлашăва татса парас шухăшпа вырăс тĕпчевçисем публицистика çинчен 70-мĕш çулсенчех тĕрлĕ ĕçсем самаях пичетлерĕç. Анчах та журналистикăпа илемлĕ литература практики вара çак тавлашусем çине ытлах çаврăнса пăхмарĕ. Паян кун та публицистика статйисем, очерксем, репортажсем пичетре çав-çавах çапăнаççĕ. Уйрăм кĕнекесем тухаççĕ, теори вара, 70-мĕш çулсенчи пекех, практикăран çаплипех юлса пырать.

Татсах каламалла, пĕр-пĕр хайлава публицистикăллисен шутне кĕртес пулсан, çав произведенире публицистикăн тĕп паллисем пулмалла. Çав паллăсем уçăмлах мар пулсассăн хаçатри материала хăш палли ытларах пулнине шута илсе е информацилле е комментариллисен шутне илетпĕр. Апла пулсан публицистикăн тĕп паллисем мĕнле-ха, унăн илемлĕхĕ, хăвачĕ, хĕрӳлĕхĕ мĕнре палăрать? Пĕр шутласан çаксем пурте ансат ыйтусем пек çеç туйăнаççĕ. Анчах та тĕплĕнрех, тĕсесерех пăхсан, хăйне майлă творчествăллă тавлашу илемлĕ литературăпа журналистика чиккинех пырса тухать.

Мĕн-ха вăл публицистика? Пысăк совет энциклопедири статья: «Публицистика вăл – хальхи пурнăçăн чи кирлĕ ыйтăвĕсене уçса паракан обществăлла-политикăлла литература», - тесе ăнлантарать. Публицистика йĕрĕсене тĕплĕн тупса палăртас тенĕ чухне çакна та манмалла мар - публицистика ытларах чухне çĕршывăн кулленхи пурнăçне, историне çырса пырать. Лайăххине, усăллине, кирлине сыхласси, япăххине халăхран сиресси те унăн тĕллевĕсенчен

пĕри пулмалла.

Публицистика тĕллевĕсене пайăррăнрах палăртнă чухне публицистсен парăмĕ пурнăç аталанăвĕ çине, мĕнпур ырă ĕçсем çине лайăх витĕм кӳресси пулнине те асра тытмалла. Паллах, публицист шухăшĕ пĕр çын сасси çеç мар, вăл халăх сасси, халăх куçĕ пулмалла тетпĕр. Унăн тĕллевĕсем те çав тери ырă та таса, мал ĕмĕтлĕ пулмалла, мĕншĕн тесен вăл халăх тĕнчекурăмне, тавракурăмне, шухăш–кăмăлне йĕркелес ĕçре пысăк вырăн йышăнать.

Публицистика нумай ĕмĕрсем хушши аталанса, вăй илсе пынă. Паян пирĕн çĕр шывра класс кĕрешĕвĕ пирки сахал калаçаççĕ пулсан та публицистика яланах унăн тĕкĕрĕ пулнă, мĕншĕн тесен публицистика политикăри тĕп вăйсенчен пĕри. Публицист яланах – самана çынни, çавăнпа вăл паянхи çивĕч ыйтусенчен ниепле те уйрăлса юлаймасть.

Публицистикăн пĕлтерĕшĕ кирек мĕнле обществăра та пысăк. Вăл хаçат–журналсем, радио, телевидени урлă халăх шухăшлавĕ, ăс–тăнĕ, тавракурăмĕ çине витĕм кӳрет. Çĕнĕ общество йĕркелес ĕçре, çав обществăра пурăнакан çĕнĕ ăрăвăн ăс–хакăлне хывассинче те массăллă информаци пысăк вырăн йышăнать. Ку паянхи пурнăçшăн çеç мар, пур вăхăтшăн та, пур çĕршывсен аталанăвĕшĕн те характерлă. Совет Союзĕ вăйра тăнă чухне публицистикăн тĕп туртăмĕ коммунистла партилĕх пулнине пур тĕпчевçĕсем те палăртатчĕç. Çак принцип публицистикăн идейăлăхне, ют идеологипе, пусмăрçă классен политикипе, ют моральпе килĕшсе тăма юраманнине пусарсах палăртатчĕç. Совет публицистикин тĕллевĕсене палăртнă чухне тĕпчевçĕсем: «Вăл нихçан та пурнăçа улăштарса, ытлашши хитрелетсе, çуккине пур туса çырмасть. Парти публицистикин тĕп тĕллевĕ – марксизм–ленинизм пропагандисчĕ пулса, халăха çĕнĕ çитĕнӳсем тума хавхалантарасси, пулăшасси, хатĕрлесси» - тесе калатчĕç.

Паян публицистика тĕллевне çапла касса татсах палăртмаççĕ. Паллах, публицистика пĕтĕмпех хальхи саманана, унăн канăççăрлăхне, хирĕçӳлĕхне, обществăн мораль никĕсне çирĕплетнипе, этемĕн ку чухнехи кăмăл–сипетне уçса панипе те çыхăннă. Публицистика вăл – журналист пурнăçри пулăмсен тĕшшине, тымарне шыраса тупма талпăнни.

Публицистика наукăпа питĕ тачă çыхăннă. Тĕплĕнрех тишкерсен вĕсем кӳршĕллех пурăнаççĕ. Чăн–чăн публицист хăйĕн ĕçĕнче яланах сăмах ăстипе ăсчах ăсталăхĕн пултарулăхне пĕтĕçтерсе тăрать. Публицист сăнанипе, тĕрлĕрен пулăмсем çине айккинчен çеç пăхса тăнипе лăпланмасть, çав пулăмсене тĕплĕн тишкернĕ май вулаканăн ăс–хакăлне, туйăмне хускатса унпа пĕрле пĕтĕмлетӳсем патне пырса тухать. Юлашки çулсенче публицистсем хăйсен ĕçĕсенче наука витĕмĕпе, унăн меслечĕсемпе усă курма тăрăшаççĕ. Публицист ĕçĕ, тĕплĕн пăхсан, ăсчах–тĕпчевçĕ пултарулăхĕпе çав тери çывăх тăрать. Текех ĕнтĕ публицист хăйĕн ĕçĕнче наука пĕлĕвне никĕсе хумасан йĕркеллĕ, тĕпчевлĕ хайлав çырассин шанчăкĕ çукпа пĕрех.

Тӳрех палăртмалла - публицист хăй умне лартнă тĕрлĕрен ыйтусене пăхса тухнă чухне пĕтĕмĕшле сăмахсемпе çеç калаçни унăн ĕçĕн хакне чакарать çеç. Журналист–публицист хăйĕн ĕçĕнче вăл е ку факт пирки калаçу пуçарать пулсан унăн çав пулăма тĕплĕн тишкерсе ăна пур енлĕн уçса пама туртăнмалла, çавăн чухне çеç вăл çырнă материал вулаканшăн та, обществăшăн та кăсăклă пулать. Тĕрĕссипе, публицистика вăл чăн–чăн тĕпчев, хĕрсе çитнĕ, паянхи кирлĕ ыйтăваваскавлă кун йĕркине лартать. Тĕслĕхпĕн, наука тишкерĕвĕпе наука тĕпчевĕ çинче никĕсленсе тăракан статья тĕслĕхĕсене пайăррăн пăхас пулсан - ытларах чухне политика ыйтăвĕсемпе çырнă ĕççене илсе кăтартма пулать, мĕншĕн тесен вĕсене паянхи вăхăт ыйтнипе, хăй

ирĕклĕхĕшĕн, пуласлăхĕшĕн шутлакан, кĕрешекен халăха кирлипе çырнă. Тĕрлĕрен парти ертӳçисемпе çулпуçĕсем паянхи кун та хăйсем ăнланнă таран е тавракурăмĕн анлăшĕпе тарăнăшĕ ирĕк панă чухлĕ политикăлла кĕрешӳри çивĕч ыйтусене татса пама кӳлĕнеççĕ. Вĕсенчен хăшĕ–пĕрисем хăйсен вĕрентĕвĕ, ĕненĕвĕ енне ытларах та ытларах çынна явăçтарас кăмăлпа, теприсем вара, чăнах та, хăйсен чăн–чăн ĕненĕвне тӳрĕ кăмăлпа, вĕри чунпа, ĕненмелле, витĕмлĕн, публицистла çивĕчлĕхпе çырса кăтартма тăрăшаççĕ. Çав материалсене тĕрлĕ хаçат-журналта пичетлеççĕ. Политика туртăмĕллĕ журналистикăлла ĕçсен авторĕсенчен нумайăшĕ, хăйсен ĕненĕвне тĕпе хураççĕ пулсан та, чĕрĕ, чăн пурнăçа тĕпе хурса, фактсене тĕплĕн тишкерсе философилле пĕтĕмлетӳсем тума туртăнаççĕ. Тĕрĕссипе, фактсене анализлеме пултарни, халăхăн психологине çивĕч туйса тăни, теори енчен вăйлă хĕçпăшалланни – публицистăн чи кирлĕ пахалăхĕсенчен пĕри тесе çирĕплетсех калама пулать. Тĕплĕн, пур енлĕн тишкерсе пăхсан публицист ĕçĕнче литераторпа политикăн, педагогпа психологăн, патшалăх тӳре–шарипе ăсчахăн пултарулăхĕ пĕтĕçсе–пĕрлешсе тăнине те асăрхама пулать. Апла пулин те çакна та асăрхамалла - публицист ĕçĕпе ученăй ĕçĕ çывăххи, хурăнташлă пулни вĕсем шăпах пĕр ĕç, пĕр пулăм е вĕсем шăп та лăп пĕрешкел пĕртăван пулнине пĕлтермест. Тем тесен те публицистика вăл илемлĕ сăмахпа çав тери çывăх, публицист пултарулăхĕ вара писатель–ӳнерçĕн пултарулăхĕпе тăванлă. Кун пирки таçта шала тарăн кĕрсе кайса ăнлантармасăрах çапла калама пулать – публицистика вăл пĕр документсем çине никĕсленнĕ жанр çеç мар, тĕрĕссипе вăл çак икĕ пулăмăн çирĕп хутăшĕ. Очерксем çинчен сăмах пынă чухне вара шăпах çак туртăм вăйлăрах палăрнине каласа хăвармалла. Очеркист вăл пĕр вăхăтрах пултарулла журналист çеç мар, ăста писатель те. Очерк публи-

цистикăпа илемлĕ литература картинче хăйĕн тивĕçлĕ вырăнне тахçанах тупрĕ. Çакна, тĕслĕхшĕн, Совет Союзĕ пулнă чухнех СССР писателĕсен Союзĕн правленийĕн IV пленумĕнчех илемлĕ–публицистикăлла хайлавсем çинчен ытларах калаçни те çав тери аван çирĕплетет.

Тĕсесерех пăхсан публицистика илемлĕ литературăн пĕр тĕсĕ, çавна пула вăл яланах илемлĕх сăнарĕсемпе уйрăлми çыхăнса тăрать текен шухăш патне те пырса тухма пулать. Анчах та татсах каламалла, ку шăхăш тĕрĕсех мар. Аванрах тишкерсен, тĕрлĕрен пулăмсене танлаштарса пăхсан илемлĕ литературăпа публицистика хушшинчи пĕрпеклĕхсене çеç мар, уйрăмлăхсене те аванах палăртма май пур. Паллă ĕнтĕ, илемлĕ публицистикăлла жанрсем илемлĕ литературăпа самаях çывăх, чикĕллех тăраççĕ, чикки те питĕ тачă. Тĕслĕхшĕн вырăс литературин историне тата теорине, публицистикăпа наукăна, искусствăна пайăррăн илсе сăнасан та вĕсем пĕр–пĕринпе тачă çыхăнса, пĕрне–пĕри пулăшса аталанса пынине куратпăр.

Литературăпа илемлĕ публицистика ыйтăвĕсене тĕпчекенсем хушшинче наукăпа искусствăна пĕр–пĕринпе танлаштарса пăхнин усси çукрах текен шухăш та пур. Ун пеккисем хушшинче наукăпа илемлĕ литературăна е публицистикăна «таса искусствăпа» «искусство мар» текен ăнлавсем çине пайлакансем те йышлă.

Çак «искусствăпа» «искусства мар» виçепе публицистикăпа илемлĕ литература çине пăхсан, вĕсен хушшинче «Китай стени» купалама кирлĕ марри тӳрех куçа курăнать. Мĕншĕн тесен публицистика мĕнпур «искусство мар» текен тĕссенчен пуринчен ытларах искусствăпа тачă çыхăнса тăрать. Хăшпĕр тĕпчевçĕсем публицистика жанрĕсенче илемлĕх элеменчĕсем пурине те хирĕçлеççĕ. Тĕрĕссипе вара публицистикăпа илемлĕх нихăçан та хайлавра

пĕрне–пĕри тĕртсе кăлармаççĕ, çав вăхăтрах илемлĕ литературăпа публицистика пĕр хутăш та пулса каймаççĕ. Илемлĕхпе публицистикăлăх пĕр–пĕринпе килĕштерсе çыхăнса ĕçлесен иккĕшĕ те пуянланни пирки тавлашни вара харам ĕç çеç.

Чăваш литературипе публицистикине пайăррăн илес пулсан вĕсем питĕ тачă çыхăнса аталанни лайăх курăнать. Чăваш литературипе журналистикин историне ятарлă тишкерсессĕн те, 20–мĕш ĕмĕрти октябрьти революциччен те, совет тапхăрĕнче те илемлĕ литературăпа публицистика юнашаррăн чăмăртанса пыни куç умĕнчех. Вырăс чĕлхинче «первопроходчик» текен ăнлав пур. Халиччен этем çитсе курман çĕре пырса тухнă, уçман çĕрсене тупса палăртакан çынсене çапла пайăррăн уйăрса калаççĕ. Публицистсемпе писательсене те ыттисем валли çул уçакансемпе танлаштарма май пур. Вĕсем те халиччен çын пĕлменнине пĕлме, курманнине курма, уçса пама тăрăшаççĕ. Мĕншĕн тесен пурте пĕлекен япаласемпе çынсем çинчен каласа парса, тахçанах паллă шухăшсене «çирĕплетсе» никама интереслентермен «ыйтусене» татса парса аппаланни – публицистика хĕçне мăкатни çеç пулать. Революци çĕкленĕ ирĕклĕхпе, пĕртанлăх хумĕпе хавхаланнă Çеçпĕл Мишши малашлăха витĕр курса тата чăваш çырулăхне, литературипе искусстви ӳссе çирĕпленессе шанса, килес ăрусене çапла халалласа хăварнă: «Вут кайăклăн вĕçĕр, ан юлăр, ан юлăр кунçул уттинчен!» Поэт вăхăт таппине сисĕмлĕн туйса тăнă, халăха, пурнăçпа тан пыма, революци хывнă çулпа çирĕп утма чĕнсе каланă. Çеçпĕл халалне асра тытса публицистсене те, татăклăнах çапла калама пулать: сирĕн ыттисенчен маларах пымалла, нумайрах курмалла, хальхи наука çитĕнĕвĕсене аван пĕлмелле, вулакана вĕсем халиччен пĕлменнине, илтменнине каласа памалла, пурнăçа ыттисем халиччен курман, асăрхаман енчен ӳкерсе кăтартма тăрăшмалла. Жур-

налистика ыйтăвĕсемпе ĕçлекен тĕпчевçĕсем хаçат–журналти тĕрлĕ жанрсем çинчен калаçнă чухне, пĕр–пĕр литература формипе мĕнлерех çырма май пулнине палăртса, ытларах чухне çапла калаççĕ: корреспонденцире фактсене анализлеççĕ, очеркра вара пулăмсене публицист хĕрӳлĕхĕпе, илемлĕ литература мелĕсемпе çутатаççĕ. Чăннипе вара ку тĕрĕсех те мар пулас. Тĕрĕсрех пăхсан ĕç кунта хăш жанрпа çырнинче мар - хаçатра пичетленекен материалсен характерĕ мĕнле пулнинчен те чылай килет.

Хаçатра пичетленсе тухакан материалсем пĕр–пĕринчен тĕрлĕрен паллăсемпе уйрăлса тăраççĕ. Пĕр енчен - çырса кăтартакан пулăмсем хăйсен калăпăшĕпе, тарăнăшĕпе пĕр пек марри, тепĕр енчен – пурнăçри пулăмсене автор хăй халăхпа хутшăнса сăнани урлă çутатса пани. Кун пек чухне вара уйрăм фактсемпе пулăмсене автор хăйĕн кăмăл–шăхăшĕ урлă çырса пама пултарать. Публицистика кулленхи пурнăçăн тĕрлĕ тапхăрĕнче тĕрлĕрен тĕллевсене пурнăçлать. Калăпăр, вăл е ку материалта вулакана пĕр–пĕр факт çеç пĕлтермелле, тепринче вара производствăра е наукăра тунă çитĕнӳсемпе паллаштармалла, виççĕмĕшĕнче пĕр–пĕр пултаруллă, ăста, хăйĕн ĕçĕнче малта пыракан çыннăн сăнарне кăтартмалла. Палах, тĕллевлĕхне кура материал никĕсне хывасси те, ăна пĕтĕмĕшле çĕклесе–хăпартса йĕркелесси те, ăна ăста тăрăласси те пĕр–пĕринчен уйрăлса тăрать. Çавна пулах ĕнтĕ çирĕпленсе ларнă паллăсемлĕ пичет материалĕсен ушкăнĕсем пулса кайнă. Çак материал ушкăнĕсен темиçе хутчен те палăракан йĕрĕсем уйрăм жанрсене палăртма май параççĕ. Çав жанрсен вара кашнинех хăйĕн тĕллевĕ, хăйĕн мелĕпе меслетлĕхĕ. Сăмахран, статьяра çĕнĕ сăнсем тăвас тесе сăмаха ытлашши çавăркалани–хуçкалани вырăнсăр. Анчах та ку тĕрлĕ пулăмсене, сăнарсене илемлĕх мелĕсемпе анлăн усă курса, вĕсене ӳкерчĕклесе кăтартма юрамасть тенине

пĕлтермест. Кăмăлу пулсан - çырах, публицистика илемлĕх мелĕсемпе тахçантанпах анлăн усă курать. Анчах та кун пек материал вара статья еннĕ мар, ытларах очерк патне туртăнать. Çыравçă хăйĕн умне мĕнле тĕллевсем лартнинчен хăех вĕсене тĕрлĕ мелсемпе, меслетсемпе, тĕрлĕ формăсемпе усă курма хистет. Çакна та палăртмалла – публицистикăн пĕр–пĕр жанрĕ, илемлĕ литературăри пекех, яланах «тап–тасан» тĕл пулмасть. Пĕр жанрпа çырнă материалта тепĕр жанрăн паллисем те пулма пултараççĕ. Калăпăр, корреспонденцире час–часах тĕрленчĕк е очерк йĕрĕсем, очеркра – статья, статьяра вара памфлет паллисем те курăнаççĕ. Апла пулин те, кашни жанрăнах хăйĕн тĕп паллисем, яланхи паллисем пур. Пирĕн малалли калаçу хăех тепĕр йĕр çине ўкет – жанр паллисене тупса палăртасси çине.

Чăнах та, мĕн–ха вăл жанр, ăçта унăн тĕп паллисем? Пирĕн шутпа жанр тени вăл литературăри, искусствăри пĕр йышши хайлавсен, ушкăнсен ячĕ. Пичетре, хаçат–журналсенче кашни номертех статья, заметка, тишкерў, рецензии, отчет, корреспонденции, интервью, репортаж, очерк, памфлет, фельетон, эпиграмма, тĕрленчĕк тата ытти жанрсене те тĕл пулатпăр. Тўрех ыйту сиксе тухать – вĕсем пурте публицистика шутне кĕреççĕ–и–ха? Татсах каламалла – журналистика наукинче ку тавлашăва халиччен те татса паман–ха. Пĕрисем вĕсене пурне те публицистика жанрĕсен шутне кĕртеççĕ. Публицистикăн илемлĕ жанрĕсем пирки калаçу пуçарсан та ăсчахсем пĕр шухăш патне пырса тухаймаççĕ. Кун пирки аслă çĕршывăмăр СССР пулнă çулсенче писательсен темиçе съездĕнче те çыравçăсем критиксемпе литературоведсем çине кўренерех калаçнăччĕ. Илемлĕ публицистика анинче мĕн ўсни пирки – сĕлĕ е тулă, редиска е ананас - пире критика хăçан та пулсан калĕ–ши е вăл çав–çавах çак уй урлă çаплипех сиккипе тĕпĕртеттерсе тухса кайĕ–ши тесе кўренетчĕç

вĕсем. Шел пулин те, çак кӳренĕве лăплантаракан тивĕçлĕ хурава паянхи кунччен те никамах та памарĕ. Апла пулсан та хаçат–журнал жанрĕсене кашнинех хăйне тивĕçлĕ паллăсемпе уйăрасси тахçанах йăлана кĕнĕ ĕнтĕ. Чăнах та, хаçат жанрĕсен кашнийĕн хăйĕн енĕ, хăйĕн уйрăмлăхĕ пур. Çав вăхăтрах çав уйрăмлăхсем яланлăхах пĕр улшăнми çирĕпленсе, «хытса» ларнă ятарлă формăсем те мар. Пичет жанрĕсем пĕрмаях улшăнса, çĕнелсех пыраççĕ. Кашни журналист, кашни ăста çыравçă хăйĕн пултарулăхне кура жанрсен аталанăвне мĕн те пулин çĕннине, хăйĕнне кĕртсе пырать, хаçат жанрĕсене çĕнĕ меслетсемпе пуянлатать.

Ку чухне пур хаçатра та тĕрлĕ жанрсемпе туллин усă кураççĕ. Кашни номерте тенĕ пекех умстатья асăрхатпăр, корреспонденци, интервью тупса вулатпăр. Фельетонсемпе очерксем те, рецензисемпе репортажсем те час–часах тĕл пулаççĕ паянхи пичетре. Хаçатăн тĕп жанрĕсем статья, тишкерӳ, рецензии, корреспонденци, очерк, фельетон, репортаж тата информаци жанрĕсем шутланаççĕ. Вĕсенчен хăшпĕрисем тĕрлĕ формăллă пулаççĕ. Тĕслĕхшĕн, информации жанрĕсене те уйрăммăн илсе тишкерсе тухма пулать. Кунта вунă йĕркеллĕ хроникăлла заметкăран пуçласа 60-100 йĕрке таран анлăн çырнă заметкăсем, интервью, калаçу, пĕр–пĕр кĕнеке е çĕнĕ фильм çинчен çырнă аннотацисене кĕртме пулать. Хаçатра асăннă жанрсемпе юнашар унăн «тăванĕ–хурăнташĕсене» - сценкăсемпе, пулни–курнисене, «чăн пулни» тенисене, очерксене те асăрхатпăр.

Маларах эпир вăл е ку материала мĕнле формăпа çырассине унăн содержанийĕнчен, теминчен, пулăмсен, фактсен пĕлтерĕшĕнчен тата пысăкăшĕнчен килет терĕмĕр. Шутласа хунă темăна çутатса пама вăл е ку жанра суйласа илни çеç çителĕксĕр. Журналистăн, енчен те вăл вулакана публицистика çивĕчлĕхĕпе çулăмлантарас тет пулсан, хăйĕн те

ҫивĕч ăслă та вичкĕн куҫлă пулмалла. Унăн материалне вулакан ҫын хăй те авторпа пĕрле ҫав вырăнсенче пулнă пек, унта мĕн пулса иртнине хăй куҫĕпе курса туйнă пек чухлатăр, чунĕ витĕр кăлартăр.

Ку ĕҫре эпир публицистикăлла жанрсене пурне те ятарласа пăхса тухас тĕллев лартман. Илемлĕ литературăпа публицистика жанрĕсем хушшинче очерк хăйне майлă вырăн йышăнать. Ҫавăнпа та калаҫун тĕп йĕрĕ ҫак жанр ҫинчен пулĕ. Малалла очеркăн тĕп паллисем ҫинче кĕскен чарăнса тăрăпăр.

Иртнĕ ĕмĕрти Октябрьти революции хыҫҫăн чăваш публицистики ҫĕнĕ вăйпа ешере пуҫлать. Революци ҫунатлантарнă сăмах очерк жанрĕнче те хăватлă вăй пулса тăрать. Ун чухнехи очерк нумай енлĕ пурнăҫран илнĕ чĕрĕ те конкретлă тĕслĕхсемпе усă курса халăха воспитани парас ĕҫе туса пымалла тенĕ сăмахсене хĕрӳллĕн йышăнса, М. Горький никĕсленĕ совет очеркĕн йăли–йĕркисене анлăн аталантарса, сарса пырать.

Очерк пирки XX ĕмĕрти 20–мĕш ҫулсен вĕҫнелле совет литературинче ҫивĕч дискуссии пуҫланнă. Тавлашакансем ҫак жанр пирки тĕрлĕ шухăш каланă. Хĕшпĕрисем очерка шута та илесшĕн пулман, вĕсем ун ҫине вак–тĕвек япала ҫине пăхнă пек ҫеҫ тинкернĕ. Вара ҫав дискуссие А.М. Горький хутшăннă. Аслă писатель очерка литературăн аялти сыпăкĕнче тăракан форми тенине хĕрӳллĕн хирĕҫленĕ. Совет Союзĕнче пулса иртекен ĕҫсем ҫинчен куҫăн курса каласа кăтартакан очерксем ҫырма шăпах вăл ҫамрăк авторсене нумай енчен хавхалантарса пынă. Очерксем пичетлеме паллă ҫыравҫă «Пирĕн ҫитĕнӳсем» ("Наши достижения") ятлă ятарлă журнал та йĕркеленĕ. «Пирĕн ҫитĕнӳсем» журналăн тĕллевĕ СССРти рабочисемпе хресченсен массине хамăр ҫĕршывра пур ҫĕрте те вĕресе тăракан хăватлă стройкăсем ҫинчен каласа

парасси. Пире чи кирли вăл - ĕнентерӳллĕ те ăнланма çăмăл фактсемпе çырнă очерк. Май килнĕ таран очеркăн тĕп шăнăрĕ яланах чĕрĕ çынсем çинче тытăнса тăмалла... Пирĕн журналта коллектив интересĕсемшĕн ĕçлеме пĕлекен пултаруллă, чĕрĕ çынна кăтартасси тĕп вырăн йышăнать», - тесе çырнă А.М.Горький. Çав журналта аслă писатель хăй çырнă очерксем пысăк вырăн йышăннă.

Паллă ĕнтĕ, илемлĕ проза сăнарлать, публицистика кăмăла ăнлантарать. Ӳкерес мелсемпе публицистика ăнлантарăвĕ очеркра пĕр–пĕринпе тачă çыхăнса тăраççĕ. Тепĕр чухне ку е тепĕр мелĕ ытларах палăракан тĕслĕхсем те тĕл пулаççĕ.

Хăшпĕр тĕпчевçĕсем очерк пулăшу жанрĕ – калав, повесть е роман вали хатĕрленĕ эскиз çеç теççĕ. Кун пекки, паллах, пулма пултарать. Анчах очерк хăйтĕллĕнлĕхне сирме çук. Çак шухăша вырăс журналисчĕсем А. Аграновский, Г. Радов, А. Злобин, А. Борин, К. Симонов, В. Песков, чăвашсенчен вара С. Фомин, П. Хусанкай, Я. Ухсай, Юхма Мишши, А. Аслут, П. Афанасьев, Х. Акивер, Г. Желтухин çырнă публицистикăлла очерксем те çирĕплетсе параççĕ.

Очерк илемлĕ литература жанрĕсенчен яланах документла тĕрĕслĕх пуррипе, вăл е ку пулăма, характера ӳкерсе кăтартнă чухне очеркистăн темĕн шухăшласа кăларма юраманнипе уйрăлса тăрать текен шухăш çирĕпленнĕ. Чăнах та, очеркра пурнăçран илнĕ тĕрĕс фактсем тĕп вырăнта тăраççĕ. Анчах та документла калав, повесть, документла роман пирки вара мĕн каламалла( Апла пулсан, документла тĕрĕслĕх пĕр очерк жанрĕн палли çеç мар.

Нумай чухне очеркист çын сăнарĕ, характерĕ урлă пĕр–пĕр проблемăна уçса парать, çав проблемăна сӳтсе явма, ăна татса пама чĕнет. Тепĕр чухне вара фактсемпе характерсем автор шухăшне

НАЦИОНАЛЬНАЯ
БИБЛИОТЕКА
Чувашской Республики
Ч-40274

çирĕплетсе пама çеç кирлĕ – ку вăл иллюстрациллĕ очерк. Тепĕр енчен, çыравçă паянхи кунпăн кирлĕ, пурне те интереслентерекен проблемăна çивĕч лартма хăйне кирлĕ лару–тăру е сăнар та хайлама пултарать. Очерк – публицистика произведенийĕ. Унта илемлĕ литература тата публицистика элеменчĕсем хутăшса аталанаççĕ. Хаçат–журналăн ытти жанрĕсем пекех, очерк пулса иртнĕ событисем çинчен çийĕнчех пĕлтерет, обществăри пулăмсене хăвăрт çутатса парать, çивĕч проблемăсем лартать, ӳсĕмсене ӳкерсе кăтартать, ĕçре малта пыракансене сăнласа, ытисене вĕсемпе тан пыма чĕнет. Заметка, корреспонденци, фельетон пекех очерк конкретлă фактсене кăтартма пултарать. Статья евĕр, вăл пĕр–пĕр пулăма, проблемăна хĕрӳллĕн те çивĕч тĕпчет. Ахальтен мар М. Горький очерка тĕпчевпе калав хушшинче тăракан жанр тесе хакланă.

Очеркăн паллă уйрăмлăхĕ – герой, пулăм е событи типлă пулни. Ку тĕлĕшпе очерк статья пек те, калав пек те курăнать. Статьяпа очерк пĕрпеклĕхĕ – герой е фактсем конкретлă пулни, проблемăн обществăлла пĕлтерĕшĕ. Калавпа очерк пĕрпеклĕхĕ – пулăм сăнарлăхĕ, герой типлăхĕ, литературăлла çырав меслечĕ, ĕç–пуç аталанăвĕ. Очеркпа калава малалла танлаштарсан çакна куратпăр: калаври герой – шухăшласа тупнă, пуçран илнĕ çын, унăн ĕçĕ–хĕлĕ, хăйне хăй тыткалани, сăнарлăхĕ – нумай çынсен паллисем. Очерк геройĕ – чăн пурнăçра пур çын, очеркра çырса кăтартакан ĕçсем те – чăннипех пулнăскерсем.

Очеркăн хăйĕн çыру мелĕсем, меслечĕ пур. Кунта кашни çыннăн ĕçĕ–хĕлĕ, кунçулĕ хăйне евĕр сюжет йĕрĕпе аталанса пымалла. Сюжета йĕркене кĕртсен, вулакана интереслентерекен вăхăтпа вырăна палăртсан çеç очерк пулса çитнĕ хайлав шутне кĕрет. Очеркист тĕллевĕ – пĕр–пĕр çын, ĕç, пулăм çинчен каласа парасси, ăна илемлĕ майсемпе пĕтĕмлетесси, вĕсем обществăпăн пĕлтерĕшлĕ иккенне

ёнентересси пулать. Апла пулсан, очерк çыраканăн пурнăçа хăйĕн тарăн пĕлмелле. Очеркист яланах шыравçă, йĕрлевçĕ, тĕпчевçĕ пулма тивĕç. Пурнăçра яланах çĕннине курма, халиччен никам асăрхаманнине асăрхама пĕлмелле унăн. Пурте пĕлекенни çинчен тепĕр хут сăмах çаптарни çар хыçĕнчен танккаса пыракан параппанçа çеç аса илтерет.

Очерксене темиçе ушкăна пайлама пулать: портретлă, проблемăллă, социаллă–экономикăлла очерк, çул çинче çырса пынисем т.ыт.те.

Чăваш литературинче очерк жанрĕ революциччене çурални çинчен эпир маларах асăннăччĕ ĕнтĕ. «Хыпар» хаçатрах, акă, М. Акимов чăваш хресченĕсен нушисене «Çитмен пурнăç» очеркра публицист хĕрӳлĕхĕпе çивĕч çырса кăтартнă.

Очерк аталанăвне истори енчен илес пулсан вăл уйрăмах 30–мĕш çулсенче вăй илнине палăртмалла. Çав çулсенче чăваш очеркисчĕсем совет çыннисен çĕнтерĕвĕсемпе ӳсĕмĕсем çинчен каласа пама тăрăшаççĕ. Очерксене ун чухне хаçат–журналсем çеç пичетлемен, вĕсене кĕнекен кăларасси шăпах çав çулсенче йĕркене кĕнĕ. Вăтăрмĕш çулсенче пĕрремĕш пилĕкçуллăх планĕпе палăрнă ĕçсене епле пурнăçласа пыни çинчен писательсемпе журналистсем вулакана вăхăтра каласа кăтартма тăрăшнă. Çав çулсенче Чăваш Республикинче тĕрлĕрен промышленноçсен пысăк предприятийĕсене тума тытăннă. Куславккара, Канашра, Çĕмĕрлере, вăл вăхăтри поэтсем калашле, ир те каç та хăватлă хапрăк–заводсен сасси янăрама пуçланă...

Тăван çĕршывăн пурнăçĕ улшăнса–çĕнелсе пыни, Чăвашьен те хăватлă заводсен сассипе тулни, аслă стройкăсемпе пуянланса пыни чăваш çыравçисене те пĕтĕм халăхпа пĕрле чунтан савăнтарнă, вĕсене çĕршыв хăватланса–аталанса пыни çĕнĕ очерксем çырма хавхалантарнă. Çапла çураласçĕ те ĕнтĕ Уйăп Мишшин «Автостройра», «Автогигант», «Стройка

паттăрĕсем», Ç. Шăпчăкăн «Фосфорит», А. Талвирăн «Рудниксем ăмăртаççĕ», «Колони пулнă хăтлăхра», Алакĕр Васлейĕн «Штурм», Мĕтри Васлейĕн чылай очеркĕсем. Ун чухнехи очерксене ытларах писательсем хайланă. Таса уйра çул хывасси нихăçан та çăмăл пулман, çавăн пекех 30-мĕш çулсенче чăваш писателĕсемшĕн очерк çырасси çăмăл ĕç пулман. Пĕр енчен – традици, опыт сахал пулнă, тепĕр енчен – очерк жанрĕ ун чухне чăваш литературипе журналистикинче тин çеç сăмсаланма, аталанма пуçланă. Çакна çыравçăсем хăйсем те аван ăнланнă, вĕсем хăйсен пухăвĕсенче очерк çырас ыйтусене ятарласах пăхса тухнă. Ку кирлĕ ĕçе ăнăçлă аталантарса пыма вĕсене критиксем те пулăшса пынă. Вăтăрмĕш çулсен малтанхи пилĕкçуллăхĕнче «производсăтвăлла очерксем» çеç мар, ялхуçалăхĕнчи çитĕнӳсем çинчен калăпланă очерксем те час-часах «Сунтал» журналта кун курнă. Паянхи куçпа пăхсан та çав очерксенче лартнă хĕрӳ те çивĕч ыйтусем хăйсен пĕлтерĕшне çухатман-ха. Çак енчен пăхсан çав çулсенчи колхоз пурнăçне çутатса паракан «Хаваслă ĕçлетпĕр» очерксен кĕнекине палăртма пулать. Вăл кĕнекене кĕртнĕ очерксем хăйсен тарăн шухăшĕпе, илемлĕ чĕлхипе çав çулсенче пичетленнĕ ытти хайлавсенчен уйрăларах тăраççĕ.

Очерк жанрне аталантарас, вăй илме хавхалантарса ĕçре Ç. Шăпчăк нумай тăрăшнă. Хăй хаçатра ĕçленĕ май вăл республикăри ялсене час-часах тухса çӳренĕ, тĕрлĕ çынсемпе тĕл пулнă. Пултаруллă çыравçă хăй курни-илтни çинчен вулакансене яланах вăхăтра тата туллин каласа кăтартма, пурнăçра ыттисемшĕн ырă тĕслĕх кăтартакан çынсен ĕçĕ-хĕлĕпе паллаштарма тăрăшнă. Писатель тăван республикăн малтанхи пилĕкçуллăхĕсен çитĕнĕвĕсем çинчен чун-чĕререн савăнса «Иртнипе хальхи», «Телей», «Пиллĕх», «Мархва инке», «Анат Кăмăша», «Вăрнар станцинче», «Волонтер», «Çатма çул», «Пăрмас кач-

чисем», «Çул çинче», «Парăнмастпăр–парăнмастпăр», «Хĕрӳ вăхăт», «Уçланкăри çуртсем», «Ударла бригада» очеркĕсенче каласа парать. 1931 çулта унăн «Фосфорит» ятлă очеркĕ уйрăм кĕнекен пичетленсе тухать.

Вăрçă умĕн чăваш очеркĕ кăштах йăшать, хаçат–журналсенче сахалтарах пичетленет. Ку вăл писательсем пурнăçа активлах хутшăнманнинчен те, Сталин вăхăтĕнчи хĕсĕрлеврен те килнĕ. Шăпах çав вăхăтра хăш–пĕр пултаруллă чăваш çыравçисен творчество çулĕ пӳлĕннĕ.

Тăван çĕршыв аслă вăрçи вăхăтĕнче очерк çĕнĕрен чĕрĕлсе каять. Чăваш жуналисчĕсемпе писателĕсем совет воинĕсен хăюллăхĕ çинчен, вĕсем Тăван çĕршыва паттăррăн хӳтĕлени çинчен нумай–нумай очерксем çыраççĕ. Çав çулсенче çырнă очерксене пухса каярахпа «Чăваш халăхĕн паттăр ывăлĕсемпе хĕрĕсем» ятпа икĕ кĕнекен пичетленсе кăларнă.

Вăрçă хыççăнхи çулсенче чăваш журналистикинче очерк жанрĕ вăй илсех пырать. Хăвăрт ӳссе пыракан Канаш, Çĕмĕрле хулисем çинчен Л. Агаковпа А. Ĕçхĕл кĕнекесем пичетлесе кăлараççĕ. Журналсемпе хаçатсенче промышленнăçпа транспортра, ялхуçалăхĕнче, стройкăсенче ĕçлекен паллă çынсем çинчен, ученăйсемпе искусство ĕçченĕсем, врачсемпе учительсем çинчен çав çулсенче вуншар очерк пичетленет. Ку вăхăтра чăваш очеркĕн тематики те сарăлса пырать, форми пуянланать. Çул çӳренĕ чухне çырнă дневниксем курăнкалама пуçлаççĕ. В. Миттан, П. Хусанкайăн, Хв. Уярăн ун чухне çырнă очеркĕсем чăваш журналистикин ылтăн çӳпçине вырнаçрĕç.

50-60–мĕш çулсенче, тематика енчен пăхсан, колхоз ĕçченĕсене халаллană очерксем ытларах пичетленнĕ. Промышленноçра малта пыракан çынсен ĕçĕсем çинче çырнă очерксем сайра тĕл пулаççĕ–ха.

Тен, вăл вăхăтра пирĕн республикăра промышленность аталанман пулĕ? Çук, шăпах çав çулсенче Шупашкарта пир–авăр комбиначĕ, трактор пайĕсен завочĕ, электричество виçекен приборсен завочĕ тата ытти нумай предприятисем ӳсе–ӳсе ларнă. Апла пулин те журналистсем вĕсем çинчен репортажсемпе заметкăсем çырнипех çырлахнă. Писательсем вара çак улшăнусемпе питех кăсăкланман та пулас. Çавăн пиркиех пулĕ ун чухнехи хаçат–журналта промышленность темипе çырнă очерксем сахалтарах тĕл пулаççĕ.

Жанр тĕлĕшĕнчен илсен, 60-70–мĕш çулсен чиккинче пирĕн вăхăтри çын çинчен çырнă «литература портречĕсем» курăнаççĕ. Кунта ял ĕçченĕн сăнарĕ те, тĕнчипех паллă ученăй та, ĕçре малта пыракан рабочи сăнарĕ те пур. Очерк çыракан авторсем совет çыннин паттăр ĕç–хĕлне, çыннăн кăмăл–сипетне, характерне, интересĕсене уçса пама тăрăшаççĕ.

Ку жанрпа вăл вăхăтра Уйăп Мишши, А. Эсхель, А. Талвир, Юхма Мишши, И. Григорьев, В. Алентей, П. Львов, А. Малов, С. Аслан çыравçăсем уйрăмах тăрăшса ĕçлени палăрать. Тĕслĕхрен, А. Эсхелĕн социализмла Ĕç Геройĕ, чапа тухнă колхоз председателĕ В.В.Зайцев çинчен çырнă очеркĕсем асра вырнаçмалла пулса тухнă. Вăрçăра паттăрлăх кăтартнă салтаксемпе офицерсем çинчен публицистла хĕрӳлĕхпе отставкăри полковник П. Трофимов çырнă очерксене вулакансем кăмăлласа йышăннă. Халиччен никам пĕлмен, никам çырман паттăрсене шыраса тупса Трофимов вĕсене халăх умне кăларса пысăк ĕç тунă. Юхма Мишши çав çулсенчех хăйĕн чылай очеркне Мускавра тухса тăракан хаçат–журналсенче пичетлет. Тĕслĕхшĕн, «Сельская жизнь» хаçатра 1967 çулхи октябрĕн 21–мĕшĕнче пичетленнĕ «Ырă ят», ("Доброе имя") очеркĕ пĕтĕм çĕршывĕпех ирттернĕ «Çĕрпе çынсем» ("Земля и люди") конкурсра çĕнтерет. Ку, паллах, ытти çыравçăсене те очерк

жанрĕпе ĕçлеме хавхалантарнă. Малашлăхра Чăваш халăх писателĕ ята тивĕçлĕ пулнă Юхма Мишши хăй те, маларах очерксен уйрăм кĕнекине те кăларнăскер (Хамăр ял çыннисем), час–часах «Правда», «Сельская жизнь», «Литературная Россия» тата ытти хаçат–журналсенче Чăваш республикинче пулса иртекен ĕçсемпе ĕç паттăрĕсем çинчен очерксем чылай пичетлет. Асăннă çулсенче илемлĕ литература та нумай енлĕн аталанса пырать, вăл иртнĕ тапхăрти ырă йăласене манмасть – публицистика жанрĕсене вăй парса тăрать. Çак енчен илсен А. Артемьевăн, Илпек Микулайĕн, В. Алентейĕн ырă ячĕсене асăнма пулать. Журналистсем те литературăна туртăнаççĕ, творчествăлла вăйсем пĕрлешсе ĕçлесе публицистика жанрĕсене çинс тăрсах аталантараççĕ, пуянлатаççĕ. Çакă очерк жанрĕн уйрăмлăхĕсене сăнанă чухне уйрăмах уçăмлă палăрать.

Тĕнчери тата совет классиккинчи чи лайăх очерксем шухăш аталанăвĕн вăйĕпе, шухăш пуянлхĕпе тата сăнарлăх илемĕпе палăрса тăраççĕ. Совет очеркистикинче уйрăмах М. Горький–очеркист ăсталăхĕ вăйлă палăрнă. Аса илер–ха унăн В.И. Ленина сăнарлакан очерк–портретне. Тӳрех каламалла, çынна чĕрĕ ӳкерсе пама пĕлнипе ытти унашкал хайлавсенчен чылай çӳллĕрех тăрать вăл.

Очеркистсен ăсталăхĕ çинчен калаçас пулсан çакна та палăртмалла – илемлĕ очеркри сăнласа кăтартакан мелсене публицистикăлла ăнлантарса панинчен уйăрса пăхма тăрăшнин тухăçĕ çук. Мĕншĕн тесен çак меслетсем, пĕр пăхсан илемлĕ литературăпа журналистика элеменчĕсем, пĕр–пĕринпе питĕ тачă, кăткăс, пĕтĕçсе илемлĕ хайлав йĕркелеççĕ. Çав мелсем хайлав йĕркелеме те, сăнар тума та туллин те, таранăн пулăшаççĕ.

Иртнĕ ĕмĕрти 70–мĕш çулсенчи чăваш очеркĕн сăн–сăпатне уйрăммăн пăхас пулсассăн вĕсенче уйрăмах палăрнă туртăмсене, темăсене палăртса хăвар-

малла: Чăваш республикин паянлăхĕпе ыранлăхĕ, республика тунă çитĕнӳ утăмĕсем, Шупашкар ГЭСĕ, хăватлă тракторсен завочĕ, наукăпа техника çитĕнĕвĕсем, культура аталанăвĕ, пилĕкçуллăх геройĕсемпе хастар та мал ĕмĕтлĕ çынсем т.ыт.те.

Пурнăç малалла аталантăр, Тăван çĕршывăмăр хăватлăрах та пуянрах пултăр тесе çав çулсенче совет çыннисем хастар ĕçлеççĕ. Ĕçри паттăрсен йышĕ те ӳссех пырать. Çавăнпа та 70–мĕш çулсене çĕршыв пĕр вырăнта тапăртатса тăнă тапхăр тенипе çеç килĕшме хĕн. Очеркистсем мухтава тухнă çынсен сăнарне вĕсен ĕçĕ–хĕлĕ урлă çутатса пама нумай тăрăшрĕç. Журналсемпе хаçатсем» Ленин орденĕн кавалерĕ», «Писатель блокнотĕнчен», «Çул çинче çырса пынисем» тата ытти нумай рубрикăсемпе тăтăшах очерксем пичетлерĕç, вулакансене хумхантаракан ыйтусем пирки пичет урлă калаçу пуçларĕç.

Очерк жанрĕнче 70–80–мĕш çулсенче уйрăмах В. Алендей, Х. Уяр, Юхма Мишши, А. Емельянов, В. Садай, В. Евстафьев, В. Игнатьев, И. Григорьев, А. Аслут, В. Петров, П. Львов, Л. Маяксем, Х. Агивер, И. Лисаев, П. Афанасьев, Л. Таллеров, А. Николаев, П. Трофимов, Д. Гордеев, Г. Желтухин çыравçăсем вăй хурса ĕçлерĕç. Вĕсемсĕр пуçне те пичетре çак жанрпа ĕçлекен чылай çĕнĕ хушамат курăнчĕ.

Паллă ĕнтĕ, пурнăçа тĕплĕн тишкерсе çырнă хайлав çеç вулаканăн кăмăлне тивĕçтерме пултарать. Эпир пăхса тухакан çулсенче вырăс журналистикинче кулленхи пурнăçра хĕрсе çитнĕ ыйтусене уçса парас тесе ытларах анализлă, тĕпчевлĕ, хăйне евĕрлĕ çĕнĕ пулăмлă–очерксем вăй илсе пычĕç.

Чăн пурнăçа тишкерни, тĕпчени, шырани вырăс журналистикинче уйрăмах А. Аграновский, Г. Радлов, В. Овечкин, Ю. Бондарев, В. Астафьев очеркĕсенче аван палăрнăччĕ. Çавăнпах ĕнтĕ вĕсем çырнă очерксем вулаканăн асĕнче нумайлăха юлаççĕ.

Асăннă журналистсен очеркĕсем хаçат–журналта пичетленнĕ хыççăн редакцие çав материалсем пирки çĕршер çыру пынă.

Вĕсен очеркĕсен уйрăмлăхĕ, ыттисенчен çӳлĕрех тăракан пахалăхĕ мĕнре–ха( Сăмахран, А. Аграновский пултарулăхне илес пулсассăн, вăл кирек–мĕнле проблемăна та тĕпчевçĕ, социолог куçĕпе пăхса тухать. Пурнăçри пулăмсен ăшчиккине ăнланас, пĕлес тесе, вĕсен «тымарĕ» патне çитме тăрăшса, вăл цифрăсемпе, тĕрлĕрен документсемпе анлăн усă курать. Хăшпĕр чухне таблицăсемпе сводкăсене те тиркесе тăмасть. Анчах та çак сводкăсемпе цифрăсем вулакана йăлăхтарса, ывăнтарса çитермеççĕ, очерк тымарне те пăсмаççĕ. Автор хăйĕн хайлавĕсене социолог тăрăшулăхĕпе, журналист хĕрӳлĕхĕпе çырать, фактсемпе пулăмсене танлаштарать, тĕрлĕрен событисене тарăннăн тĕпчесе пĕлет, пĕтĕмлетӳсем тăвать. Çак ĕçе Аграновский пĕччен мар, вулаканпа пĕрле, ăна та çак ĕçе явăçтарса туса пырать. Хăйĕн очеркĕсенче вăл вулакана «ăслăн» вĕрентсе мар, хăйне унпа тан çын вырăнне хурса, юлташĕпе калаçнă пек сӳтсе–явса, ăна хăйĕн шухăшĕсемпе паллаштарать. Çакă вара кирек епле вĕрентсе каланинчен те ĕнентерӳллĕрех пулать, вулакан чун–чĕрине те ытларах пырса тивет.

Чăваш очеркисчĕсем ăсталăха алла илес енĕпе чылай чухне вырăс е ытти халăх журналисчĕсенчен вĕренсе пыраççĕ. Çапах та эпир тишкерекен çулсенче чăваш публицисчĕсен Ф. Абрамовăнни, В. Беловăнни, А. Грибачевăнни, Г. Радовăнни, В. Овечкинăнни е Б. Можаевăнни пек тĕпчевлĕ, ăста та илемлĕ очеркĕсем сахалтарах тĕл пулаççĕ–ха. 70–мĕш çулсенче чăваш очерксем хисепĕпе сахалах пулман, анчах та вĕсен шучĕ пур чухне те пахалăхĕпе пĕр тан мар. Çав вăхăтра пичетленнĕ хăшпĕр очерка пайăррăн пăхса тухар–ха. Тĕслĕхшĕн, «Тракторстрой çути» кĕнекери (Шупашкар, 1975)

хăшпĕр очерксенех илĕпĕр, вĕсене çавăн йышши ытти хайлавсемпе танлаштарса пăхăпăр.

Çĕнĕ завод е гидроэлектростанци мĕнле çурални çинчен çырса кăтартас традици совет литературипе журналистикинче унччченех пулнă. «Тракторострой çути» кĕнекери очерксенче Шупашкарти промышленность тракторĕсен заводне мĕнле тунине вулакана кăтартса пама тăрăшнă. Кунта мĕнпурĕ вунвиçĕ очерк. Вĕсен авторĕсем хушшинче ятлă-сумлă çыравçăсемпе пĕрлех тин çеçрех çак ĕçе кӳлĕннисем те пур.

А. Талвир «Директор» ятлă очеркра вулакана пулас трактор завочĕн директорĕн Виктор Тимофеевич Десятовăн ĕçĕ-хĕлĕпе паллаштарас тĕллев тытнă. Писатель хăйĕн очеркне Шупашкарти хăватлă тракторсен заводне тума КПСС XXIV съезчĕн директивисенче палăртса хăварни çинчен пĕлтернипе пуçланать. Унтан писатель хăй 30-мĕш çулсенче çĕршыври пысăк стройкăсенче пулни, çавăнта чăвашсем те йышлă ĕçлени çинчен асăнать. Малтанхи строительсен хастарлăхĕ 70-мĕш çулсенчи ăрăва та хавхалантарнине кăтартса, очеркист стройкăри йывăрлăхсене директор сăнарĕ, унăн ĕçĕ-хĕлĕ урлă палăртма тăрăшать. Автор директор ĕçне-хĕлне тĕрлĕ лару-тăрура сăнать. Завод ертӳçин ĕçĕ ăшă пӳлĕмре ларнипе çеç пулмасть. Çитменнине, малтанлăха çĕнĕ завод штатĕнче директор секретарĕ те, шофер та, бухгалтер та пулман. Пĕтĕм ĕçе директорăн пĕччченех ĕлкĕрсе пыма тивнĕ. Каярахпа, завод аталанса пынă май, очерк геройĕн ĕç вăхăчĕ яланхи пекех сакăр сехете вырнаçмасть, кабинетра сĕм çĕр пуличченех ĕçлесе ларма тивет. Директор ĕçĕ-хĕлĕ тип-тикĕс пымасть, унăн çулĕ çинче нумай тумхах тĕл пулать. Десятов, вĕсенчен пăрăнса, çавра çулпа каясшăн мар, вĕсене парăнтармалли майсем шырать. Анчах çаксене писатель темле типĕрех, хаçат статйи чĕлхипе çырса панă. Чăнах та ĕнтĕ, унта-кунта

беллетристика йышши элементсем те тĕл пулкалаççĕ, анчах хайлава «Очерк» ятпа пичетленĕ пулин те, ăна чăн–чăн илемлĕ очерк теме йывăртарах.

Авторăн çырас ăсталăхĕ те, ĕçсемпе çынсене илемлĕ ӳкерсе кăтартма, диалогсем тума пултарни те палăрать. Очеркĕ вара çавах асра юлмасть. Мĕншĕн( Мĕншĕн тесен хĕрӳ публицист шухăшĕ тапса тăни хайлавра сисĕнмест.

«Тракторострой çутисем» кĕнекере çакăн пек очерк сахал мар. Пĕтĕмĕшле хак парсан, вĕсем таран шухăш çуккипе, унти çынсене пĕр конфликтсăр кăтартнипе уйрăлса тăраççĕ. Кун пек очерксем хаçат–журнал страницисенче чылай пичетленеççĕ. Кĕнекене кĕртнĕ очерксем вара çав шайран иртмелле, маларах каймалла пулнă пек ĕнтĕ. Шел, ун пек пулайман. Акă, В. Давыдов–Анатри хăйĕн очеркне «Тракторостройри тусĕмсем» тесе ят панă. Очеркĕ тăвата пĕчĕк пайран тăрать. Малтанхи пайĕн геройĕ - Альберт Захаров.

Автор ăна малтан пĕр–икĕ хут калаçтаркаласа илет те унăн ĕçри çитĕнĕвĕсемпе паллаштарать. Вăл бригадир–мĕн. Апла пулсан пĕр ун çинчен çеç калани сахал пулĕччĕ. Кăна çыравçă аван ăнланать. Çавăнпа автор бригадăри ытти çынсем çинчен те сăмах пуçлать. Вĕсенчен нумайăшĕ куçăмсăр майпа институтра, техникумра е каçхи шкулта вĕренет иккен. Пурте бригада чысĕшĕн тăрăшаççĕ. Ĕç тухăçлăхне ӳстересшĕн хастар кĕрешеççĕ. Захаров бригади плана срокчен тултарать те ырă ят çĕнсе илет. Бригадира пурте хисеплеççĕ. КПСС Чăваш обкомне, юлашкинчен СССР Верховнăй Советне депутата суйлаççĕ. Аван темелле ĕнтĕ бригадăри ĕçе–хĕле. Анчах кунта пĕтĕмпех яп–яка та çăп–çăмăл пулса тухать. Строительсен ĕçĕ уяв тейĕн – нимле йывăрлăх та, нимле хирĕçӳлĕх те çук.

Очеркăн иккĕмĕш пайĕ те çавнашкалах. Уйрăмлăхĕ çакă кăна: пĕрремĕшĕнче сăмах А.М. Захаров

бригадир çинчен пырать, иккĕмĕшĕнче – Н.К. Бочков электрик çинчен. Ку бригадăра та пурте ĕçшĕн çунаççĕ, дисциплинăна пăсмаççĕ. Бочковăн çемйери пурнăçĕ те çыпăçуллă–мĕн. Арăмĕ те строитель иккен Бочковăн. «Килте чухне строительствăри çĕнĕ меслетсем çинчен, наукăри çитĕнӳсем çинчен калаçаççĕ вĕсем», - тесе мухтать вĕсене автор. Анчах çакна вулакан куçăн курмасть те, палах, ĕненмест. Ĕнентерес тесен автор каласа кайни çеç çителĕксĕр, геройсене те калаçтармалла. Ку та сахал, вулакана хăйне те очеркра çырса кăтартакан геройсемпе, вĕсен ĕçĕ–хĕлĕпе интереслентерсе яма пĕлмелле.

Очерка вуласа тухнă çын мĕн астуса юлĕ–ши( Бочков электрик аллинче пĕрремĕш номерлĕ табель иккенне çеç пĕлчĕ вăл. Анчах ку та вĕçне çитиех паллă мар. Пĕтĕм тракторостройри пĕрремĕш номерлĕ табель–ши унра, е хăйсен бригадинчи çеç(

Очеркăн ытти сыпăкĕсене те çав калăппах çырнă. Кашни герой – чаплă та пултаруллă строитель. Пурте ăна хисеплеççĕ, унпа мухтанаççĕ. Вăл ĕçлекен бригада çыннисем те маттур, вĕренме, пĕлĕве ӳстерме тăрăшаççĕ. Очерк геройне депутата суйлаççĕ, ĕç ăмăртăвĕн çĕнтерӳçи ятне параççĕ т.ыт.те. В. Давыдов–Анатри очеркне вуласан геройăн чун–чĕринче мĕн пулса иртнине, пурнăçри кăткăс пулăмсене курма, çынсен характерне туллин ăнланса илме хĕн. Паллах, коллективпа килĕштерсе, хăйĕн ĕçне юратса тăвакан çынна очеркра ӳкерсе парасси, ăна ĕçре кăтартасси çăмăл мар. Схема, штамп хыççăн кайни хайлав хакне чакарать. Очеркист такăр çулпа çеç чуптарнин усси сахалрах, унăн шырав, тĕпчев çулĕпе пымалла, произведени шухăшпа та пуян пултăр тесе тăрăшмалла. Вулакана фотограф евĕр очеркист тивĕçтереймест. Тата материала очерк ят панипех вăл илемлĕ публицистика хайлавĕ те пулаймасть.

В. Давыдов - Анатри очеркĕсенче тракторо-

стройра ĕçлекен çынсем мĕн шутлани, хăйсен ĕçĕнче вĕсем мĕн тӳссе ирттерсе мĕнле опыт пухни, хăйсем мĕнле улшăнса пыни курăнмасть. Çаксем пурте хайлав тулашне тăрса юлнă. Çавна пулах, публицистла шухăшлавпа илемлĕх мелĕсем пĕрлĕшлĕ, пĕр çыхă пулса каяйман.

А. Сатай «Трактор завочĕпе ăна лартакансем» очеркра çак хăватлă предприятие тăвакан çынсене кăтарнă чухне стройкăра тĕл пулакан йывăрлăхсене асăрхамасĕр иртмест. Стройкăра ĕçлекенсен пурнăçĕ те çăмăл пулманнине, вĕсене пурăнма пӳлĕмсем çитменнине курать автор. Çав çитменлĕхсене пĕтермелли майсене кăтартать. Çынсем пирки сăмах пуçарсан очеркист вĕсем çинчен çиелтен çеç каласа каймасть, кулленхи ĕçĕ-пуçĕпе паллаштарать. Акă унăн геройĕсенчен пĕри - Николай Финогенов. Вăл копер экипажĕн командирĕ. Трактор завочĕ тунă çĕрте малтанхи кунтанпах ĕçлет. Финогенов хăйсен ĕçĕнчи чăрмавсемпе пăтăрмахсем çинчен калаçать. Никĕс валли çапакан сăвайсем копер «мăлатукĕ» айĕнче тĕпренеççĕ, теприсем хуçăлаççĕ иккен. Мĕнрен килет – ши çакă? Ку сăвайсене тума усă куракан цементран тата технологие мĕнле пурнăçланинчен килет иккен. Шупашкарти ЖБК-9 завод сăвайсене кирлĕ пахалăхпа, çителĕклĕ хатĕрлесе параймасть иккен. Çавна пула копровщиксен план та тулаймасть. Мĕншĕн сăвайсене кирлĕ таран хатĕрлеймеççĕ–ха, мĕншĕн юрăхсăррисене подрядчиксем пăрахăçлаймаççĕ, мĕншĕн строительствăна ертсе пыракансем кирлĕ мерăсем йышăнмаççĕ? Çак ыйтусене очерк уçăмлă хуравламасть пулин те хăйĕн çивĕчлĕхĕпе вăл ыттисенчен уйрăларах тăрать.

В. Сатай малалла Николай Мартьянов ертсе пыракан комплекслă бригада çинчен сăмах пуçлать. Автор ĕçченсене мухтаса, вĕсемшĕн хĕпĕртенине палăртнипе çеç çырлахмасть. Вăл строительсен ĕçне çăмăллатма, унăн пахалăхне ӳстерме пулăшасшăн.

Çапла тума чăрмантаракан сăлтавсене те тĕллесех кăтартать çыравçă. Акă, сăмахран, никĕс хунă чухне усă куракан йывăç щитсем питĕ шанчăксăр, вĕсем хăвăрт ванса юрăхсăра тухаççĕ. Тимĕррисем, вĕсене тыткалама йывăр пулин те, рабочисене ытларах килĕшеççĕ. Анчах вĕсем çителĕксĕр иккен. Мĕншĕн сахал? Мĕншĕн тимĕр щитсене стройкăна ытларах кӳрсе килмеççĕ? Çыравçă кун пек щитсене Шупашкарта туманнине пĕлет. Очеркиста çак ĕçе трест çумĕнчи механика уйрăмĕнчех е Шупашкарти пĕр-пĕр заводра тума пулмасть-ши текен ыйту пăлхантарать пулин те вĕсем çине вăл чăн-чăн публицист хĕрӳлĕхĕпе хурав шырамасть. Паллах, хуравламаллахчĕ-ха, çак ыйтусене тĕпчемеллеччĕ, вара пичетленнĕ ĕç усăллăрах та, интереслĕрех те пулатчĕ, стройкăри çитменлĕхсене пĕтерме те пулăшатчĕ. Тен, очерк авторĕ кун пек тĕллев лартман пулĕ, çавăнпах вăл хăйĕн хайлавĕнче стройкăра ĕçлекенсем чапа тухас е нумайрах укçа ĕçлесе илес кăмăлпа мар, çĕршыва, тăван халăха ытларах усă кӳрес тесе хавхаланса ĕçленине палăртма тăрăшнă пулас.

Николай Битюцкий экскаваторщикпа Александр Ширбин монтажник ĕçне-хĕлне автор çак очеркра асра юлмалла ӳкерсе кăтартнă. В. Сатай çавăн пек хастар рабочисене тĕслĕх вырăнне хурса, стройкăра ĕçлекенсен пурнăçĕ малалла мĕнле пуласси çинчен, çакă вара рабочисенчен хăйсенчен те нумай килни пирки, пĕрлехи тивĕçе кашниех мĕнле ăнланса илсе чĕрене хывни çинчен шухăшлать.

70-мĕш çулсенче промышленность темипе нумай хайлав çырнă очеркистсенчен пĕри – Иван Григорьев. Ĕçре малта пыракан рабочисемпе инженерсем çинчен вăл 70-мĕш çулсенче илемлĕ очерксен кĕнекине те кăларнăччĕ. «Тракторострой çути» кĕнекене унăн «Кунсемпе эрнесем» очеркĕ кĕнĕ.

Очерка форми енчен илсен интереслĕ йĕркеленĕ. Хайлав А. Шойкин бригадир дневникĕ тăрăх çырнă

евӗр аталанса пырать. Автор бригадир дневникне вӑл чӑн пурнӑҫра мӗнле пулнӑ ҫаплипех илсе кӑтармасть, публицистикӑлла шухӑшлавпа пуянлатса вулакансем умне кӑларать. Авторӑн хайлав геройне идеализацилесе, якатса–илемлетсе кӑтартас туртӑм ҫук. Шойкинӑн, ытти нумай ҫынсенни пекех, йӑнӑшасси те пулать. «Лайӑх ен – йӑнӑша ӑнланса илсе тӳрлетме тӑрӑшни», - текен шухӑш патне ҫитет вулакан авторпа пӗрле. Анчах автор ҫак очеркра стройкӑри ытти ҫивӗч ыйтусене публицистикӑлла хӑюлӑхпа хускатма ӑнтӑлни ҫук. Ҫакӑ хайлавӑн вӑйне самаях сӗвӗртет, ӑна паянхи кунпа ҫирӗп ҫыхӑнассине чӑрмантарать.

Х. Акивер хӑйӗн «Ӗҫ - пурнӑҫ тыткӑчи» очеркӗнче чӗрӗ, ӗненмелле сӑнарсем ӳкерсе кӑтартать. Апла пулин те, унта нимле ҫӗнӗ ҫивӗч ыйту та кӑларса лартмасть. Ҫакӑн пек анлӑ, улӑп стройкӑра вара йывӑрлӑх–хирҫӳлӗхсӗр пулманах ӗнтӗ. Пулнах ун пек ыйтусем, вӗсенчен пӑрӑнмалла мар ҫеҫ. Ку вӑл хӑй пӗр тема, ӗҫри маттур ҫынсене кӑтартса парасси – тепӗр уйрӑм тема тесе хирӗҫлеме те пулать-ха, ҫавах та строительсем ҫинчен ҫырнӑ чух стройкӑри йывӑрлӑхсемпе йӑнӑшсем, тӗрӗсмарлӑхсем ҫинчен шарламанни илемлӗ публицистика хакне ӳкерет.

Очеркистсем пысӑк стройкӑпа унта ӗҫлекен ҫынсем ҫинчен ҫырса ӗҫ ҫын кӑмӑл–туййӑмне еплерех ҫӗнетнине ӳкерсе пама тӑрӑшнӑ. Кӗнекере ӑнӑҫлӑ вырӑнсем те пур. Нумай очерксен чӗлхи аван пулин те хӑш–пӗрисем кӑлтӑксенчен хӑтӑлайман. Сӑмахран, вӗсенче ҫынсен чунне уҫса парас ӑсталӑх ҫителӗксер. Фактографипе схематизм тени чылаях такӑнтарать авторсене. Хӑш чухне пуян материалтан чи кирлине суйласа илменни те чӑрмантарать. Ҫавна пулах авторсем вак–тӗвек тавра сапаланса кайнӑ. Чылай очерк пӗр–пӗр проблемӑллӑ ыйту хускатса вулакан чун–чӗрине хумхантараймасть, шухӑша та яраймасть.

Вĕсенчен чылайăшĕ композицийĕпе те пĕр пекрех, геройсен характерĕсене те хăнăхнă калăппа хывнă. Вĕсене тарăннăн, нумай енлĕн уҫса пани сахалтарах, схематизм тени хытах палăрать.

Эпир пăхса тухакан ҫулсенче трактор заводне тăвакансем ҫинчен Юхма Мишши писатель нумай-нумай очерк ҫырчĕ. «Чебоксарский богатырь» кĕнеки Мускавра пичетленчĕ. Юхма очеркĕсем хăйне евĕрлĕ илемлĕхпе тата сăнарлăхпа уйрăлса тăраҫҫĕ. «Тракторострой ҫути» кĕнекере унăн икĕ очеркĕ пичетленнĕ. Ҫак очерксене ăнăҫлă сюжетпа йĕркеленĕ, хайлаври геройсен характерĕсене уҫса пама улăп-стройка пурнăҫĕнчи чи паллă самантсене, пулăмсене суйласа илнĕ. Стройкăра вăй хуракансен сăнарĕсене туллин ҫырса кăтартас тĕллевпе очеркист конфликт мелĕпе ăнăҫлă та ырăнлă усă курнă. Унăн «Тăхăр кирпĕч» очеркне пăлханмасăр вулама та май ҫук. Хайлавăн тĕп геройĕ – Валерий Николаев бригадир. Вăл, ĕҫрен киле кайма тухнăскер, стройкăра ĕҫлекен машинăсем ҫул ҫине ӳкерсе хăварнă тăхăр кирпĕче курать. Валерий, ҫав кирпĕчсене пуҫтарса, каялла таврăнать. «Стройплощадкăна кайса хурас тетĕп. Сая ан кайччăр. Ҫын ĕҫĕ вĕт-ха кусем те! Пирĕн пуянлăх! Халăх пуянлăхĕ», - тет вăл. Ҫак сăмахсенче очерк геройĕн сасси ҫеҫ мар, авторăн публицистла сасси те, чун кăмăлĕн туртăмĕ те аван палăрать. Автор шухăшĕ очерк геройĕннипе пĕр килет, хайлава вулаканăн шухăшĕ те, вĕсеннипе пĕрлешсе, пĕрпекленсе каять. Ҫакăн пек ăсталăх очерка вăй парса тăрать. Очерк геройĕ ҫул ҫине тăкăнса юлнă кирпĕчсене пуҫтарса каялла стройкăна йăтса кайнине пĕр ҫамрăк строитель курать. Вăл пĕр гĕлĕнсе, пĕр шăл йĕрсе Николаевпа калаҫма тытăнать. Бригадир ҫиленерех ăна ҫапла ăнлантарать: «Кам кирпĕчĕ тетĕн эсĕ ăна? Патшалăх кирпĕчĕ, хамăр кирпĕч. Кирпĕч ҫумне кирпĕч хурсан ҫурт, завод тăватпăр эпир. Эсĕ апла

каласа тăран. Шăл йĕрсе тăриччен кирпĕч хакне пĕлес пулать...» Мĕн чухлĕ шухăш, хуçасăрлăхшăн тарăхнă чĕре ыратăвĕ çуралать очерка вулаканăн. Чăнах та, производствăра, çĕнĕ стройкăра çакă уйрăмах сисĕнет, хуçалăхсăрлăх, кирлĕ материалсемпе перекетлĕн усă курма пĕлменни çĕршыва чылай тăкак кӳнĕ. «Хамăн мар, патшалăхăн (колхозăн)» тени иртнĕ ĕмĕрĕн 70–мĕш çулĕсенче халăх хушшинче сисĕнмеллех вăй илнĕччĕ. Шел, паян та тĕл пулкалать–ха çак шухăш–кăмăл халăхра. Очеркист патшалăх мулĕ халăх мулĕ пулнине, ăна перекетлемеллине публицист хĕрӳлĕхĕпе палăртать. Çак шухăша автор каласа çеç каймасть, герой сăнарĕ тавра йĕркелесе пырать.

70–мĕш çулсенче промышленность темипе çырнă очерксене пĕтĕмĕшле хаклас пулсассăн вĕсенче çынсен кăмăл–туйăмне, психологине çителĕксĕртерех уçса кăтартнине палăртмалла. Чылай чухне очеркистсем анлă материалтан чи кирлине суйласа илме пĕлменни те сисĕнет. Çавна пулах хăш–пĕр авторсем вак–тĕвек темăран çӳлерех çĕкленеймерĕç. Паллах ĕнтĕ, кун пек очерксем проблемăллă ыйтусем хускатса вулакан чĕрине пăлхантараймарĕç, шухăша та яраймарĕç. Композици енчен илсен нумай–нумай очерксем пĕр евĕр йĕркеленни те тӳрех куçа тăрănать. Çитменлĕхсем пирки малалла калаçас пулсан промышленность темипе çырнă очерксенче пурнăç анлăшĕпе тарăнăшне, ун пылакĕпе йӳççине кăтартни çителĕксĕртерех, геройсен характерне илемлĕх мелĕсемпе тарăннăн, пур енлĕн уçса пани те чухăнрах.

70–мĕш çулсен пуçламăшĕнче ялхуçалăх ыйтăвĕсемпе çĕр ĕçченĕсем çинчен çырнă очерксем мĕнлерех пулнă–ши тата? Калас пулать, чăваш очеркĕсем çав çулсенче ялта пулса иртекен ĕçсене сăнасах тăма, вĕсене хак пама тăрăшрĕç. Ялта ĕçлесе пурăнакансем çинчен В. Алентей, А. Ĕçхĕл,

Юхма Мишши, А. Емельянов, Л. Таллеров, Н. Афанасьев, В. Петров, А. Аслут, Л. Маяксем, Г. Желтухин, А. Дмитриев, Г. Луч тата ытти çыравçăсем те очерк чылай пичетлерĕç. Хайлавĕсем хаçат–журналга та, кĕнекен те кун курчĕç. Акă, сăмахран, Чăваш Республикин Ĕç Мухтавĕпе Паттăрлăхĕн Хисеп Кĕнекине кĕртнĕ хастар çынсемпе паллаштаракан очерксен пуххи. «Малтисем» ятпа уйрăм кĕнекен пичетленнĕ вăл. К. Петров çырнă «Шуршăлсем» ятлă очерксен кĕнеки те колхозлă ял пурнăçĕ çинченех.

1978 çултан пуçласа Чăваш кĕнеке издательстви ялхуçалăхĕнче малта пыракансем çинчен «Пучах» ярăмпа çуллен кĕнеке пичетленĕ, унта репортажсемпе, интервьюсемпе, статьясемпе пĕрлех очерксем те кĕреççĕ.

Çак ярăмри пĕрремĕш кĕнеке «Тăван уй–хир» ятлăччĕ. Унта пичетленнĕ очерксене уй–хир ĕçченĕсен опытне, пурнăçне кăтартса парас тĕллевпе çырнă. Паллă ĕнтĕ, очеркист ытларах конкретлă çынсемпе пулăмсем çинчен çырать. Çак кĕнекери очерк геройĕсем те шутласа кăларнăскерсем мар, вĕсен ячĕпе чăн адресĕ те паллă. Çав очерксемпе паллашсан, вулакан республикипех паллă колхоз председателĕпе хăмлаçă çинчен, РСФСР тава тивĕçлĕ агрономĕпе Социализмла Ĕç Геройĕ т.ыт. çынсем çинчен те пĕлет.

Çирĕммĕш ĕмĕрти 70–мĕш çулсенчи очерксенче конкретлă çынсемпе пулăмсем çинчен, вĕсен тĕрĕс адресне кăтартса çырас туртăм ӳссех пырать. Сăмах май çакна та палăртмалла - хăшпĕр тĕпчевçĕсем пуласлăха адрессăр очерксенче кураççĕ пулин те пайăррăн палăртнă çынсем çинчен çырнă хайлавсен шучĕ пичетре паян та ӳссех пырать. Паллах, тепĕр чухне очеркистсем хăйсен геройĕсен портречĕсене ӳкернĕ май, вĕсен хушамачĕпе ятне, миçе çул вĕреннине, хăçан, ăçта çуралнине справка евĕр кă-

тартса хăварни те тĕл пулкалать. Теприсем вара кун пеккине пачах та асăнмаççĕ, е кăштах çеç перĕнсе иртеççĕ. Вĕсем ытларах геройăн сăн–сăпатне, унăн ĕçĕ–хĕлĕпе тыткаларăшне, кăмăлне ўкерсе кăтартма тăрăшаççĕ.

Акă мĕнле «кăтартать» вулакана хăйĕн геройне Лаврентий Таллеров ("Стройкăра та, сцена çинче те" очеркра, Коммунизм ялавĕ. 1979, ноябрĕн 4–мĕшĕ): «Куштăркка аллисем çирĕп те вăйлă хăйĕн, пĕвĕ–сийĕ йĕкĕт чухнехи пекех яштака, çăмăл, сарă çўç кăтрашкисем çеç таçта кайса кĕнĕ - çуталнă лĕпки». Вулакан умне ĕненмеллерех тухса тăтăр тесе çакăн пек тĕплĕн сăнарлать автор хайлав геройне. Хăшпĕр çыравçăсем, очерксен документла витĕмлĕхĕ вăйлăрах пултăр тесе, тĕрлĕрен канцеляри хучĕсенчен илнĕ сыпăкĕсемпе, цифрăсемпе анлă усă кураççĕ. Анчах унашкал япаласене ытлашшипех кĕртсе тултарни пур чухне те усса килмест. Хайлава очерк картинчен кăларса ярасси те инçех мар ун пек чухне. «Тăван уй–хир» кĕнекери авторсем тĕрлĕ цифрăсен тыткăнне кĕрсе ўкмен, вĕсем хăйсем çыракан çынсем çинчен çĕннинс, вулакансем ку таранччен пĕлменнине калама тăрăшнă. Унти очерксенчен чылайăшне чун–чĕререн тухакан ăшă туйăмпа çырнă. Акă, П. Афанасьевăн «Çĕр хуçи» очеркĕ. Ăна пĕрремĕш сăпатпа, журналист хăй каласа панипе пуçласа янă. Анчах çак, хăшпĕр çыравçăсенни пек: «Редактор çавăнта кайса, çавăн çинчен çырса килме хушрĕ, эпĕ кайса курса килтĕм те очерк çыратăп», - тенĕ пек пулса тухман.

Материала тишкернĕ май унта икĕ чĕлхе сийĕ пулнине туятпăр: публицистикăпа баллетристика. Вĕсен хутăшĕ очерк стилĕшĕн характерлă. Кунта автор хăй çинчен тўрремĕнех çырса кăтартни ге, публицистикăлла шухăшлав та пур. Публицистикăна юрăхлă калаçăвăн виçĕ компоненчĕ: каласа, ўкерсе панипе пĕрлех автор хăй тарăн шухăшласа ка-

лаçнипе те тĕл пулатпăр. Вĕсем текстра ирĕклĕн çыхăнса пырса, пĕрне–пĕри улăштарса е пĕрлешсех кайса илемлĕ литература стилĕнчен уйрăмрах стиль йĕркелеççĕ. Вăл, сăнасарах пăхсан, ахаль калаçупа çывăхрах тăрать. Автор калаçăвĕ очеркра вăл хăйĕн геройĕ çинчен лăпкăн кăна каласа панипе пуçланать те, кĕтмен çĕртен тенĕ пекех очеркист ораторла хавхаланса, хĕрӳленсе калаçса каять. Çак меслетпе усă курса автор хăйĕн геройĕ çинчен çеç мар, хайлавра çĕкленĕ проблемăсем çинчен те сăмах пуçлать. Илемлĕ хайлавра публицистикăн асăннă виçĕ компоненчĕ çапла пĕр–пĕринпе ирĕклĕн килĕштерсе «пурăнни» очеркшăн çеç характерлă.

Очерк авторĕ хăйĕн ĕçĕнче час–часах «эпĕ» тени, унпа ăнăçлă усă курма пĕлсен, хайлава нимĕн чухлĕ те пăсса хумасть. Вăл очеркăн публицистика вăйне ӳстерме çеç пулăшать, авторăн шухăш тарăнăшне, шыравĕпе пĕтĕмлетĕвĕсене палăртма май парать. Тӳрех каламалла, çак меслетпе очерк çыракансем анлăн усă кураççĕ. Очеркра журналист пурри сисĕнсе тăни хайлава вăйлатать çеç. Калăпăр, интервью жанрне илес пулсан унта журналист хăйне «эпĕ» тесе асăнни вулакана çырса кăтартакан япалапа çывăхрах паллаштарма çеç кирлĕ. Очеркра вара автор хăй пуррине палăртни вулакана хăйпе пĕрле шухăшлама хистеме, ăна ĕнентерме, агитацилеме кирлĕ. Паллах, ку йывăр та кăткăс тĕллев. Хайлаври тĕп сăнарăн ăшри туйăмĕсене ăнланса илсе вĕсем çинчен вулакана хăв ятупа каласа пама пĕрре те çăмăл мар. Йăнăшсан–тусан очерк геройĕ умĕнче те аван мар, вулакан куçĕнчен те ӳкен.

П. Афанасьев очеркĕнче «эпĕ» тенине ӳкерме пуян та хитре чĕлхепе усă курнă. Очерк пуçламăшĕнче, героя кăтартиччен, автор колхозри ĕçченсене аса илет, вĕсене пĕчĕк картинăсем урлă ӳкерсе парать. Çав картинăсем пĕр–пĕринпе килĕшсе çыхăнса пыраççĕ. Кун хыççăн вара автор пире

хăйĕн геройĕпе паллаштарать. Çакна очерк геройĕ хăй биографине каласа кăтартнă пек йĕркеленĕ. Сергей Афанасьевăн пурнăçĕпе паллашнă май вулакан çĕршыв историйĕн тĕрлĕ тапхăрне, колхозлă ял йывăрлăхĕсене курать.

Вăтам шкул хыççăн техникум пĕтерет очерк геройĕ, часах ăна фронта илсе каяççĕ. Вăрçăран вăл аманса таврăнать. Колхозра ватă–вĕтĕпе хĕрарăмсем çеç тăрса юлнă ун чухне. Сергея йĕркеллĕ сывалса çитиччен бригадира лартаççĕ, кайран района куçараççĕ, кĕçех япăхса кайнă чи вăйсăр колхоз председательне суйлаççĕ. Чĕлхе енчен тишкерсен П. Афанасьев очеркĕнче хаçатри публицистикăна юрăхлă калаçу элеменчĕсемпе конструкцисем те тупатпăр. Документла тĕрĕслĕхе палăртакан конкретлă ятсем, хушаматсем, адрессем, фактсемпе цифрăсем те нумай хайлавра ("Акă, трактор бригадирĕ Нестер Андреевич Макаров... Пĕртен–пĕр çын уçрĕ председатель алăкне, Михаил Ферапонтов, пиллĕкмĕш бригада бригадирĕ". Цифра информацийĕ - «Суха тарăнăшне 30-35 сантиметра çитерчĕç, çакă хăех гектар çинчи тухăçа 4-5 центнер ӳстерме май пачĕ»). Çав хушăрах очерк лексикинче технологизмсемпе ятарлă терминсем нумай тĕл пулса вулакана йăлăхтармаççĕ.

Çак очерка тĕслĕхшĕн, теори енчен тишкерес материал пек пăхас пулсан. вăл ытти нумай жанрсен стиль паллисене пĕрлештерсе тăнине асăнмалла. Унта информации жанрĕн – репортажăн, заметкăн, статьяпа тишкерĕвĕн е политикăпа наука публицистикин – стилĕсем палăрни очерк пахалăхне ӳстерме çеç пулăшать. Унсăр пуçне очеркра фельетонри юморпа сатира мелĕ те, новеллăри сăмах ӳкерчĕкĕ те кĕрсе каять. Шăпах ĕнтĕ тĕрлĕ стиль сĕмĕсене пĕлсе чĕлхе пуянлăхĕпе ăнăçлă усă курни П. Афанасьев очеркне ыттисенчен уйрăмрах сăн кӳрет. Автор тĕрлĕ стиль элеменчĕсемпе усă курать пулин те, унăн материалĕ хăйĕн жанр чиккинчен тухса,

статья е репортаж шутне кайса ларман. П. Афанасьевăн «Çĕр хуçи» очеркĕ çавах та ытларах статья евĕрлĕ, тĕрĕсрех каласан, унăн (очеркăн) характерĕ статьянни евĕрлерех. Кунта анализлени, тĕпчени ытларах тĕл пулать. Çав вăхăтрах унăн публицистикăлăхĕ те пысăк. Автор сасси кунта çухалса кайман – вăл очерк композицийĕнче тĕп вырăнта тăрать. Çак хайлавра публицистика та, илемлĕх те пур. Тĕрĕссипе, кирек мĕнле очеркра та публицистикăпа илемлĕх пайĕсем шăранса пĕрлешеççĕ пулин те, вĕсенчен хăшĕ те пулсан ытларах палăрса тăрать.

Эпир тишкерекен очерка пайăррăн илес пулсан - унта сăмахпа ӳкерни, вулакана ун куçĕ умне чĕрĕ сăнарсем кăларса тăратса ĕнентерни çителĕксĕртерех. Анчах та çапла калани П. Афанасьевăн очеркĕ статья пулса кайнă тенине пĕлтермест.

А. Талвир, Н. Григорьев, П. Афанасьев очеркĕсенче тĕпчени, публицистика элеменчĕсем ытларах пулсан, В. Алендей, Л. Таллеров, Юхма Мишши, Г. Желтухин, А. Дмитриев очеркĕсенче вара илемлĕх элеменчĕсем нумайрах.

А. Аслут та эпир пăхса тухакан çулсенче ял ĕçченĕсем çинчен чылай очерк çырчĕ. 1979 çулхи ноябрĕн 11–мĕшĕнче «Коммунизм ялавĕнче» унăн "Коммунист тата пилĕкçуллăх" рубрикăпа «Яла таврăнсан» очеркĕ пичетленнĕччĕ. Унта автор хуларан яла таврăнса фермăра ĕçлекен çамрăксем çинчен каласа кăтартнăччĕ. Очеркĕ ăсталăх енчен вăтам шайра пулин те, автор унта тĕрлĕрен проблемăсем патне пырса тухнă (анчах та вĕсене таран тĕпчеймен): ял çамрăкĕсенчен ытларахăшĕ мĕншĕн шкул хыççăн хулана каять, хăшпĕрисем, хула пурнăçĕпе темиçе çул пурăннă хыççăн, Тамара Якимовăпа упăшки пек, мĕншĕн киле каялла таврăнаççĕ: Вĕсем, хулара пурăннă çулсенче, хăйсен завочĕ шефа илнĕ хуçалăхсене кайса тырă вырма, утă çулма, çĕрулми,

кăшман кăларма юратнă иккен. Тăван совхозра ĕçсем юлса пыни вара вĕсене яланах шутлаттарнă. Миçе хутчен амалнă–ши яла таврăнса уй–хирте, фермăра ватăлса пыракан ашшĕ–амăшĕ вырăнне тăрас ĕмĕт? Кун пирки автор маларах çапла каланă: «Шкул пĕтерсенех хулана васканăччĕ вăл (Тамара Якимова - В.П.), пир–авăр комбинатĕнче чăн–чăн телей тупнăччĕ». Хулара «чăн–чăн телей тупнă» çын яла каялла мĕнле сăлтавпа таврăннă–ши? Телейрен телей шыраманни вулаканшăн паллă ĕнтĕ. Апла пулсан, автор героя яла çăмăллăнах илсе килнине вулакан ĕненĕ–ши? Тен, совхозра ял ĕçченĕсем валли хулари специалистсенни евĕр условисем туса панă Тен, чăнах та, очерк геройĕ яла чĕре хушнипех килнĕ? А. Аслут, çак ыйтусем патне тӳрремĕнех пырса тухнă пулин те вĕсене ăнлантарса паман, çавна пулах очерк хакĕ чакнă, пахалăхĕ енчен ытти çавнашкал хайлавсен шайĕнчен çӳле çĕкленеймен. Аслут вара ăста очеркистсенчен пĕри. Ăстаран нумайрах ыйтаççĕ, ăстаран вĕренсе пыраççĕ. Анчах та унăн çак очеркĕ вĕренмелли тĕслĕх пулаймарĕ. Автор ăна хыпаланса çырни, пурнăçри чăн–чăн хирĕçӳлĕхсене асăрхама тăрăшманнни куç умĕнчех.

Хуларан яла таврăннă çынсем çырнă очерксем пичетре маларах та, каярах та курăнкаларĕç. Вĕсенче те вулакана кăтартса ĕнентерсе пани мар, ытларах каласа пани тĕп варăнта пулчĕ. Çемьеллĕ, хваттерлĕ, хулара тымар янă çынсене авторсем вăр–варах ялти пуçлăхсемпе "алă çапса килĕштереççĕ" те хуларан яла ăсатаççĕ.

Публицист ĕçне пурнăçри çĕнĕ событисене тăвакансем хăйсем хăватлăн пырса кĕни, çак йывăр çăка вĕсем хăйсем çине хăюллăнах тиени паян никама та тĕлĕнтермест. Акă, сăмахран, комсомолпа парти райкомĕсенче нумай вăхăт секретарьте ĕçленĕ Анатолий Емельянов. Унăн сасси шăпах иртнĕ ĕмĕрĕн 70–мĕш çулĕсенче вăй илсе çитрĕ, витĕмлĕн

янăрама пуçларĕ. Хăйĕн очеркĕсенчи геройсене вăл, хăшпĕр çыравçăсем пек, пĕрре курнипех вулакан умне кăларса тăратмасть. Хăй аван пĕлекен, пĕрле çăкăр ӳстернĕ, Çеçпĕл калашле, пĕрле ташланă, савăннă çынсем çинчен ытларах каласа паратчĕ вăл. А. Емельянов эпир пăхса тухакан çулсенче хăй ялта пурăнман пулин те, çĕр ĕçченĕсем патĕнче час–часах пулнă, ялти улшăнусене вăхăтра асăрхама тăрăшнă, вĕсене тĕрĕс çулпа мĕнле аталантарма май пуррине шыранă. Çĕре сыхласси, ăна тирпейлĕ усрасси, унпа типтерлĕ усă курасси - Анатолий Емельянов очеркĕсен тĕп теми. Çак темăнах вăл хăйĕн калавĕсемпе повеçĕсенче те малалла тăснă.

Тĕслĕхшĕн "Çырма Куçми" хайлавах илер. Тĕп герой - Куçма Кураков колхозник. Ăна çырма–çатра колхоз çĕрне ватса–çĕмĕрсе кайни канăç памасть. Никам хушмасăрах, пĕчченех эррозипе кĕрешме пуçлать вăл. Çырма çурнă вырăнсенче çатан карта тытать, шырлансене пĕчĕккĕн çирĕплетет. Куçма ĕçĕ çине хăшпĕрисем шанмасăртарах пăхаççĕ, çатан тытсах ишĕлсе юхан çĕре тытса чарма пуласса ĕненмеççĕ. Колхоз ертӳçисем те малтан унăн пуçарăвне вырăнах хурасшăн мар. Кураков ĕçĕнчен куласшăннисем те тупăнаççĕ. Çак кирлĕ те усăллă ĕçе райком секретарĕ асăрхать, эрозие хирĕç кĕрешекен бригада йĕркелеме пулăшать. Пĕрле ĕçлекенсем, ырă ĕçе пуçарнă колхозника хисеплесе, ăна Çырма Куçми тесе ят параççĕ. Ыр ут хыççăн çĕр ут шыв ĕçет тенĕ пекех, парти райкомĕ тăрăшнипе кĕçех Кураковăнни евĕр бригадăсем пĕтĕм районĕпех йĕркелеççĕ. Çырма Куçмине вара мелиораци колоннин пуçлăхĕ пулма сĕнеççĕ. (Ку, паллах, иккĕленӳллĕрех. - В.П.)

А. Емельянов хăйĕн хайлавĕсенче çĕнĕ пуçарăва пурнăçа кĕртнĕ чухнехи йывăрлăхсене анлăн, вĕсенчен пăрăнса иртмесĕр ӳкерсе пама тăрăшать. Вулакан умне Çырма Куçми çинчен кăна çырнă

произведени çеç мар, паянхи ялăн пурнăçне, ĕçĕ–хĕлне кĕрешĕвне кăтартакан хайлав тухса тăрать. Автор çырма–çатра мĕншĕн алхаснине, ăна чармалли мелсене очеркри пек герой сăнавĕ урлă тĕпчет, çĕре сыхлама кирли çинчен публицистикăлла пĕтĕмлетӳ тăвать. "Çĕр - çăкăр амăшĕ, çĕр пĕтĕм халăх пуянлăхĕ. Ăна сыхламалла. Ăна лайăх упрамалли çирĕп закон пур. Ăна ахальтен кăларман. Вăл закон Федор Ивановичшăн та, Юрий Степановичшăн та (хайлаври геройсем - В.П.) тухнă, ăна пурнăçламалла".

Эрозие чарса лайăх тырă–пулă туса илес тесен, вăрмана сыхлама кирли, унпа пĕлсе, виçеллĕ усă курмалли çине автор уйрăмах тимлĕ пăхать. Ĕçчен çыннăн усăллă ĕçĕ çинчен каласа панă май автор паян татса памалли ытти çивĕч проблемăсене те çĕклет: мещенлĕхе хирĕç кĕрешесси, ялти йĕркене çирĕппрех тăвасси, хушнă ĕçшĕн ытларах ыйтасси, ĕçе хисеплеме вĕрентесси, алра диплом пурришĕнех пиçнĕ–пиçмен специалиста пысăк пуçлăха лартма кирлĕ марри т.ыт.те.

Хальхи специалист хакĕ пирки шутласа автор райком секретарĕн сăмахĕсемпе çапла калать: "Эпир халь вĕреннĕ çынсемпе тĕнче умĕнче мухтанма пултаратпăр. Тен, мухтанма тивĕç те, эпир тек чухăн мар. Çук, чухăн мар. Пĕр аллă çул каялла институт пĕтернĕ çынсене чăвашра пӳрнепе те шутласа кăларма пултарнă. Агрономсем те, инженерсем те, зоотехниксем те пур районта. Ĕçе йĕркелеме пултараканнисене тахçанах пуçлăхсене лартнă. Ĕçлеççĕ. Тĕрлĕрен ĕçлеççĕ-ха та вĕсем... Тĕрлĕрен...

Çапла диплом илни нумай, анчах еплерех специалист вăл? Хăй ĕçне чĕререн юратни çинчен кам диплом парать? Ăслă кĕнекесемпе ларса ирттернĕ канăçсăр каçсене кам шута илет? Аçу–аннӳ панă тарăн ăса мĕнле хуплашкана хаклатăн?

Ку диплома пурнăç çеç парать".

Çак сăмахсенче автор аслă пĕлӳллĕ специалистсем нумайлансах пынишĕн хĕпĕртени те, анчах та вĕсенчен хăшĕ-пĕрисем институтра илнĕ пĕлӳпе ĕмĕрлĕхех лăпланса ларнишĕн, теприсем тата хăйсен ĕçне юратманшăн хурланни те сисĕнет. Автор 70–мĕш çулсенчех лартнă ыйтусем паян та хăйсен пĕлтерĕшне çухатман–ха. Тĕрĕссипе, вĕсене çак 30-35 çул хушшинче те татса парайман. Çак çивĕч ыйтусене писатель публицистла хĕрӳлĕхпе çĕклет. А. Емельянов колхозлă ял пурнăçне аван пĕлсе сăнлани унăн хайлавне паянхи кунпа - экологи пăтăрмахĕсенчен сыхланассипе, ялхуçалăхĕнчи хутшăнусене çĕнетессипе, çĕр ĕçлекен çынна чăннипех çĕр хуçи тăвассипе тачă çыхăнтарать.

Çак хайлаври ĕçсем чăваш ялĕнче пулса иртеççĕ, анчах хăш районти, хăш колхозри паллă мар. Ку конкретлă адрессăр хайлав. Писатель, Вăрнар районĕнче чылай вăхăт ĕçленĕскер, унти ялхуçалăх специалисчĕсемпе руководительсене, колхозниксене аван пĕлекенскер, яланхи пекех, ку произведенийĕнче те çав тавраша сăнама, ĕç–хĕл унта пулса иртнине палăртма тăрăшать. Çапах та кунти ĕçсем Чăваш республикинчи кирек–хăш колхозра та пулма пултарнă. Апла пулсан, каллех жанр ыйтăвĕ сиксе тухать. Мĕн ку - калав е очерк( "Ялав" журналта пичетленнĕ чухне ăна "калав" тенĕ, Мускаври "Советская Россия" издательство вара çак хайлава "Кузьма Овражный" ятпа уйрăм кĕнеке пичетлесе кăларнă май очерк тесе палăртнă. Пирĕн шутпа, ку вăл - очерк материалĕпе çырнă калав. Мĕншĕн тесен очерк, ытларах портретлă очерк, калавран яланах документла тĕрĕслĕх пуррипе, конкретлă çын çинчен çырса кăтартнипе уйрăлса тăрать. Хăшпĕр тĕпчевçĕсем, çак шухăша хирĕçлесе, автор прототипсем çине таянса, ял, вырăн ятне улăштарса е тата пачах тĕрĕс адрес кăтартмасăрах очерк çырма юрать теççĕ. Тĕрĕслĕхшĕн час–часах Валентин Овечкинăн

"Районные будни" ярӑмне илеҫҫӗ. Совет литературинче асӑннӑ хайлава адрессӑр очерк вырӑнне хурасси тахҫанах йӑлана кӗнӗ. Тен, ку шухӑшпа килӗшме те пулатчӗ пулӗ, анчах та Овечкин хӑй вара ҫав хайлава нихӑҫан та очерк тесе ҫирӗплетсе каламан, ӑна хӑш жанр шутне кӗртесси критиксен ӗҫӗ тенӗ вӑл. Ҫавӑнпа та ҫак хайлава хӑш-пӗр литературоведсем повеҫсен шутне кӗртнинчен те тӗлӗнме кирлӗ мар. Чӑнах та, асӑннӑ хайлава вулакансем те, литература критикӗсем те очерк тесех йышӑннӑ. Тӗрӗссипе вара унта шутласа кӑларнӑ япаласем ҫав тери нумай: парти райкомӗн секретарӗ Мартынов, пӗрремӗш секретарь - Борзов, Троицк районӗ хӑй те. Чӑнах та, ҫак произведени чӑн пурнӑҫра пысӑк шӑв-шав ҫӗкленӗ - парти пухӑвӗсемпе пленумӗсенче ӑна ятарлӑ сӳтсе явнӑ, тӗрлӗрен постановленисем йышӑннӑ та Троицка хӑйсен шухӑшӗсене ҫырса пӗлтернӗ...

Витӗр сӑнаса пӑхсан хайлавӑн историне пӗлекен ҫын В. Овечкинӑн "Районные будни" хайлавне очерк имитацийӗ тесе ҫирӗплетсех калама пултарать. Очеркла калав тенӗ пулаттӑмӑр эпир ӑна, вара ҫак произведени жанрӗ пирки малалла калаҫма пысӑк сӑлтав та пулмӗччӗ. Ҫавӑн пекех А. Емельяновӑн "Ҫырма Куҫмине" те очерк картине кӗртме сӑлтав ҫукрах. Ку хайлав очеркла калавӑн ҫирӗп тӗслӗхӗ.

Очерк авторӗ чӑн пулнӑ фактсем ҫинчен, ҫынсем ҫинчен ҫырнӑ чухне кӑштах та пулин хӑйӗнчен шутласа кӑларса ҫырма пултарать-ши( Тӳрех каламалла, очеркра фантазилесе, пулман ӗҫсене пулнӑ пек, пулнӑ ӗҫсене илемлетсе-эрешлесе, чӑн пулнисене урӑхлатса ҫырни жанр законӗсене хирӗҫлет. Очеркистшӑн хайлав никӗсӗпе тыткӑчи чӑн факт пулмалла. Пӗтӗмлетӳсене авторӑн хӑй шутласа кӑларнӑ тӗслӗхсем урлӑ мар, пурнӑҫри фактсем урлӑ тумалла. Хӑй вӑхӑтӗнче М. Горький фактсӑр очерк пулма та пултараймасть тенӗ. Очеркистсен пурнӑҫа

пур енлĕн те тараннăн тĕпчемелле. Фактсене тĕрĕс ӳкерсе парас тесен малтан авторăн хăйĕн вĕсене тарăн ăнланса илмелле, пĕр–пĕринпе танлаштарса виçелесе тупсăмне тупмалла. Çак шухăшпа очерк жанрне ятарласа тĕпчекен ăсчахсем те килĕшеççĕ (Е. Журбина, М. Черепахов, Т. Беневоленская). Журналистсем хăйсенчен мĕн те пулин шутласа кăларса çыраççĕ пулсан вĕсен ирĕксĕрех пурнăçра чăн пулнине вăл шăп та лăп мĕнле пулнă пек мар, вăл автора мĕнле курăннă пек çырса кăтартма тивет. Кунта вара хăйне евĕрлĕ хăрушлăх пур - вăл е ку çын çинчен илемлетсе, пулманнине пулнă пек туса çырни очерк геройне те аванмарлантарать, очеркиста хăйне те лайăх мар лару–тăрăва кĕртсе ӳкерме пултарать.

Çапла вара, колхозлă ял пурнăçĕ çинчен 70–мĕш çулсенче çырнă очерксем çинчен çакăн пек кĕске пĕтĕмлетӳ тума пулать: тематика енчен илсен очерк, 50–мĕш, 60–мĕш çулсемпе танлаштарсан, анлăрах. Анчах та унăн содержани пахалăхĕпе тишкерӳ тарăнăшĕ çав–çавах çителĕксĕртерех пулнă. Очеркистсем пĕр–пĕр фактран е пулăмран малах иртсе каяймаççĕ. Фактсем пухăннинчен пурнăçри туртăм, процесс пуçланнине курмаççĕ, курсан та çиелтен çеç тишкереççĕ. Нумай чухне очерк авторĕсене паллă событи е паттăрлăхпа чапа тухнă пĕр–пĕр çын интереслентерет, çавна май очерксем чылаях сенсаци сулăмĕллĕ пулаççĕ. Кулленхи пурнăçра çынсем тăрăшса ĕçленине очеркистсем ялан пекех асăрхамасăр иртсе каяççĕ. Шăпах кулленхи пурнăçра конфликтсемпе çĕнĕлĕхсем тымарланаççĕ вĕт–ха. Вулакана курни çинчен каласа панипе çеç çырлахни мар, курнă япала çинчен тарăн шухăшласа, ăнланса калаçакан публицистика ытларах килĕшет, унăн ăсхакăлне хускатса кăмăла тивет. Шăпах çавăн пек очерксене халăх ытларах кăмăллать, ытларах вулать.

Эпир пăхса тухакан çулсенче "Литературная газета", "Комсомольская правда" хаçатсенче очерксем пичетленнĕ хыççăн редакцие çырусем нумай пынине палăртатчĕç. Чăваш очеркисчĕсем пичетре тухса калаçнă хыççăн редакцие çырусем шутсăр нумай килнине никамах та каламасть. Ахальтен мар ку. Вулакана хумхантаракан материал çеç редакцие çыру çырма хистет çав.

Эпир пăхса тухакан çак çулсенче очерк жанрĕнче ăнăçлă ĕçлекен çыравçăсен ячĕсене маларах асăнтăмăр ĕнтĕ. Çав шутра иртнĕ ĕмĕрĕн 90–мĕш çулĕсенче "Чăваш халăх писателĕ" хисеплĕ ята тивĕçлĕ пулнă Юхма Мишши очеркĕсем хăйсене уйрăмрах вырăн йышăнаççĕ. Вăл çырнă чылай хайлавсем Шупашкарта çеç мар, Мускавра та чылай пичетленчĕç. Юхма хайлавĕсем чăваш вулаканĕсенче, вĕсен чунĕсенче çĕнĕрен чăваш наци туйăмне вăратма, чăваш ĕмĕт–шухăшне çĕкленме чылай пулăшрĕç ("Шурă чечек", "Чăваш юрри", "Саркайăк юрри", "Чăваш арăмĕ", "Кăвак хуппи", "Звезда гагауза", "Дружба с корней", "Доброе имя", "Книга о Чувашии" ятлă очерксен кĕнеки). Официаллă историксем, штатлă идеологсем, функционерсемпе литература критикĕсем чăвашăн иртнĕ пурнăçне çеç мар, халăхне хăйне те мĕскĕнлетсе кăтартма, унăн ăс–тăн, халăх сăмахлăхĕн пуянлăхне, ырă йăли–йĕркине манăça кăларма тăрăшрĕç пулсан - пуян чунлă çыравçăсем, вĕсенчен чи пултаруллисен шутĕнче Хуначи Кашкăрпа Юхма Мишши чăваш çыннин лăпкă та çăра юнне çывăрса каясран, шухăшлавĕ мăкаласран, чунĕ чапрасланасран чылай сыхларĕç. Пултаруллă, чĕрĕ чунлă, хăй тĕллĕн шухăшлама, шухăшланине ирĕккĕн калама пултаракан хăюллă, ăслă çыравçăсене (идеологи ĕçĕн тĕллевне тĕрĕс ăнланса тӳрĕ пурнăçласа пымалла тесе) тĕрлĕ шайри пуçлăхсем - партин, писательсен Союзĕн ертӳçисемпе тӳри–шарисем шуçлак та ултавлă, суя çул çине астарса кĕртсе ярасшăн

пайтах вăй хучĕç. Тăван чĕлхене, литературăна, хамăра атте-анне парнеленĕ, асатте-асаннесем пехиллесе хăварнă йăла-йĕркене, чăвашлăха хӳтĕлеме тăрăшакан писательсемпе журналистсене, наукăпа искусство, культура ĕçченĕсене 70-мĕш çулсенче вăр-варах националист ят паратчĕç те вĕсен малашлăх çулĕн хапхине шалтах хупса хуратчĕç. Ку пулăм 30-50-мĕш çулсенче çеç мар, 70-мĕш çулсенче те хăйĕн хура çунатне нацилĕх ыйтăвĕн ыранлăхне хупламалăх ирĕклĕн сарса ячĕ. 50-мĕш çулсен пуçламăшĕнче А. Алкана, С. Элкера, 60-мĕшсенче А. Талвира "буржуалла националист" тесе айăпланă пулсан, 70-мĕш çулсенче çак йăлмака Хуначи Кашкăр писатель-педагогпа Юхма Мишшине персе чикме хăтланчĕç, ячĕсене юрăхсăра кăларасшăн пайтах тăрмашрĕç. Анчах та чăн-чăн пултарулăх темле йывăрлăхра та хăйĕн вăйне çухатмасть, хĕртсе шăварнă тимĕр пек çирĕпрех çеç пулать. Çав çулсенче Юхма Мишшин нумай хайлавĕсем, çав шутра очеркĕсем те, Мускаври тĕрлĕ издательствăра пичетленсе тухрĕç. Тĕслĕхрен, унăн "Доброе имя" очеркĕ "Сельская жизнь" хаçатра 1972 çулта кун курчĕ. Çав хайлавшăн Юхма Мишшине "Земля и люди" ятлă премии пачĕç. Апла пулсан, 70-мĕш çулсенче чăваш очеркĕ пĕтĕм Совет Союзĕн арени çине тухса хăйĕн аталану вăйĕпе пиçĕлĕхне аван кăтартрĕ.

70-мĕш çулсенче чăваш хаçат-журналĕсенче партипе совет, комсомолпа профсоюз работникĕсем çинчен çырнă ĕçсем сахалтараххи çинчен калаçкалатчĕç. А. Эсхелĕн çак темăпа çырнă "Райком секретарĕ" очеркне критиксемпе литературăна тĕпчекенсем чи ăнăçлисенчен пĕри тесе хакларĕç. Каярахри çулсенче те парти работникĕсем çинчен асра юлакан очерксем чăваш хаçачĕ-журналĕсенче тĕл пулсах каймарĕç.

Очеркăн ытти тĕсĕсем çинчен каласан, çакна палăртмалла: çав çулсенче чăваш хаçат-журналĕсенче

ытларах портрет–очерксем пичетленнĕ. Вĕсенче хăйсен ĕçне юратса ĕçлекен тĕрлĕ специальноçлă çынсем çинчен каласа панă. Очеркри геройсем кашни - уйрăм характерлă, тĕрлĕрен интереспа пурăнакан çын, анчах та вĕсене общество ырлăхĕшĕн ăнланулла ĕçлени пĕр чăмăра пĕрлештерсе, пĕтĕçтерсе, тăванлатать. Портрет–очеркра автор геройăн пĕтĕм пурнăçне мар, паллăрах тапхăрĕсене çеç илсе кăтартать.

Халиччен пăхса тухнă очерксем производствăри маяксем çинчен каласа пачĕç. Унсăр пуçне 70–мĕш çулсенче ӳссе çитĕнекен ăрăва иртнĕ ăрăвăн паттăрла, вилĕмсĕр ĕçĕ–хĕлĕ урлă Тăван çĕршыва чунтан юратма вĕрентес тесе çырнă очерксем те кун курчĕç. Çарпа патриотизм темипе çырнă хайлавсем тесе палăртаççĕ вĕсене пичетре.

Çамрăксене патриотизмла воспитани парас енĕпе пичетре Прохор Трофимовпа Антип Николаев уйрăмах хытă тимлерĕç. "Ялавпа" "Тăван Атăл" журналсенче вĕсем асăннă темăпа очерксем чылай пичетленĕччĕ. Пĕтĕмĕшле илес пулсассăн, патриотизм темипе çырнă очерксенчен П. Трофимовăн "Вăл разведчик пулнă", "Танксем çапăçăва кĕреççĕ", "Амăшĕн парни", "Вут–çулăм витĕр", "Одер çинчи паттăрлăх", Н. Стуриковăн "Панов урамĕнчи Пановсем", А. Николаевăн "Хурçă хĕрнĕ чух", Мĕтри Ваçлейĕн "Вăл пулеметчик та, разведчик та пулнă", Л. Маяксен "Карпат тăвĕсем çийĕн", И. Матросовăн "Космовский полкĕнчи хĕрарăм–боецсем", А.Аслутăн "Пĕр металлран", А.Самойловăн "Чапшăн çапăçман вĕсем" хайлавĕсене, пирĕн шухăшпа, чи ăнăçлисем шутне кĕртме пулать.

Ку очерксем граждан вăрçипе Тăван çĕршывăн аслă вăрçинче палăрнă, анчах та, тĕрлĕ сăлтавсене пула вулакансем халиччен те çителĕклĕ пĕлмен паттăрсем çинчен каласа параççĕ е вĕсем çинчен çĕнĕ фактсем пĕлтереççĕ.

Пурнăç хăватлăн аталанса пынă май очеркист-

сем умне ҫӗнӗрен те ҫӗнӗ ыйтусем анлӑн тухаҫҫӗ. Чӑваш очеркисчӗсем вӗсене пачах асӑрхамасӑр хӑварнӑ теме ҫук. Ҫапах та, тӗрӗссипе каласан, пирӗн хаҫат–журналсенче паянхи кун та, урӑх пурнӑҫ сехечӗ шакканӑ хыҫҫӑн та, чӑннипех пысӑк проблемӑсем хускатакан очерксем сахал–ха.

Иртнӗ ӗмӗрӗн 70–мӗш ҫулӗсенче мӗнрен килнӗ–ши ҫакӑ( Журналистсем пурнӑҫри пулӑмсене, событисене, фактсене ҫиелтен ҫеҫ сӑнанинчен–ши е пурнӑҫ хӑй вӗсене ҫителӗклӗ материал паман–ши( Тӳрех каламалла, ҫав ҫулсенче пирӗн республикӑра те, ҫӗршывра та татса паман проблемӑсем пайтах пулнӑ. Ҫыравҫӑсенчен чылайӑшӗ вара вӗсене татса пама ҫеҫ мар, тӗпчеме те туртӑнман. Мускавра тухса тӑракан "Литературная газета" хаҫатра сӑмахран, шӑпах ҫав ҫулсенче "суд очеркӗ" рубрикӑпа публицистикӑлла хӗрӳ, ҫивӗч, проблемӑлла очерксем пайтах пичетленчӗ. Чӑваш республикинчи хаҫат–журналсенче вара ун пеккисем 70–мӗш ҫулсенче хушӑран ҫеҫ курӑнкалаҫҫӗ.

Ҫул ҫинче ҫырса пынисем, ҫулҫӳрев очеркӗ - илемлӗ очеркӑн тепӗр тӗсӗ. Вӑтӑрмӗш ҫулсенчех Чӑваш республикинчен инҫетри вырӑнсене - Кузбаспа Донбаса, Вӑтам Азипе Кавказ республикине (Митта Ваҫлейӗ, А. Петокки), Инҫет Хӗвелтухӑҫӗпе Ҫурҫӗрте пурӑнакан халӑхӗсен кунҫулне сӑнлакан (Г.Савкай "Анлӑ Амур", "Чикӗ тӑрӑх") очерксем чылаях ҫырнӑ. Ҫав ҫулсенчех С.Лашман Мускав ҫинчен ("Советсен тӗп хули - социализмла Мускав), Ҫ. Шӑпчӑк Узбекистан тӑрӑх курса ҫӳрени ҫинчен ("Поезд ҫинче") очерксем пичетлесе кӑларнӑ.

Ҫулҫӳрев очеркне вӑрҫӑ хыҫҫӑн Хв. Уяр тепӗр хут чӗртсе ярать. ("Сахалинти ҫуркунне"). Вӑл "Хир енчисем" (1956), "Яланах ҫул ҫинче" (1958), "Тӑван ҫӗршыв тӑрӑх" (1960) очерксем пичетлет. Хв. Уярӑн очеркӗсем ытти ҫыравҫӑсене те вырӑнтан хускатаҫҫӗ. Ҫак жанрпа 50–60–мӗш ҫулсенчех С. Шавли "Кинел

чăвашĕсем" (1956), "Эмпуçне артистсем килчĕç" (1956), "Çарăмсан пуçланнă çĕрсенче" (1965), Уйăп Мишши "Çурçĕр çулĕ çинче", "Инçе çулсем тăрăх" (1959), К. Турхан "Чĕмпĕрти тĕлпулусем" (1961) очерксем çырнăччĕ.

Каярахри çулсенче чăваш писателĕсемпе журналисчĕсем урăх çĕршывсене те çитсе кураççĕ. Унти пурнăç, культура, халăхсен историйĕ, ĕçĕ–йĕрĕпе йăли–йĕрки, çутçанталăк тĕлĕнтермĕшĕсем çинчен вĕсем чăваш куçĕпе сăнаса, тĕпчесе, илемлĕ, çепĕç чĕлхепе публицистла мелсемпе каласа панăччĕ.

60–мĕш çулсен вĕçĕнче Уйăп Мишши "Кай енче" ятлă очерксен кĕнекинче хăй Швеци, Дани, Англи, Франци тăрăх курса çӳренине çырса кăтартнăччĕ. Буржуалла патшалăхсенчи ĕççыннисен пурнăçне вăл фактсемпе, публицист ăсталăхĕпе ĕнентермелле кăтартнăччĕ. Хĕвелтухăç Европăри патшалăхсем çинчен, хăй унта мĕн курни–илтни çинчен В. Станьял "Англире икĕ эрне" очеркĕнче сăнарлă чĕлхепе, вулакан ĕмĕт–шухăшне çатăрласа ярса илмелле çырнăччĕ.

70–мĕш çулсенче çулçӳрев очеркĕсене Хв. Уяр ытларах çырать. "Шушăра", "Саян тăванĕсем патĕнче" очеркĕсенче вăл В. Ленин ссылкăра пурăннă вырăнсене ӳкерсе, сăнласа панăччĕ. "Енисей тăрăх" очеркĕнче çыравçă Çĕпĕрти аслă юханшыв хĕрринче хăй мĕн–мĕн курнипе паллаштарать. Хв. Уяр çав çулсенче Бам тунă çĕрте те пулчĕ, ун çинчен "Бам - паттăрлăх çулĕ" ("Пионер сасси", 1977, Апрелĕн 2–мĕшĕ, 5–мĕшĕ) очеркĕнче çамрăк вулавçăсене каласа кăтартнăччĕ. "Ĕнчĕ утравĕ" очеркĕнче ("Коммунизм ялавĕ", 1976, 198-200; номерсем) вара автор хăй Шри Ланка (Цейлон) республикинче курса çӳрени пирки, ирĕкс тухнă халăхăн пурнăçĕ, ĕмĕчĕ–шухăшĕ çинчен вулакан пĕлменнине, курманнине чылаях пĕлтерчĕ, вĕсем çинчен илĕртӳллĕ, селĕм чĕлхепе каласа кăтартрĕ.

Теори енчен пăхас пулсассăн, çулçӳрев очеркĕсем хăйсен формипе тĕрлĕрен пулма пултараççĕ: эссе, чуна уçса пани, илемлĕ ӳкерчĕк т.ыт.те. Кунçырав (очерк–дневник) вара çыру пек, интервью–монолог пек, шухăшлав пек йĕркеленме пултарать. Нумай çыравçă çулçӳрев очеркĕсене хăй çул çинче кашни кун çырса пынă дневник майлă йĕркелет те "Пĕрремĕш кун", "Иккĕмĕш кун", "Виççĕмĕш кун" тесе пĕчĕк пайсене уйăрать. Çулçӳрев очеркĕсемпе тĕрленчĕксем, кунçыравĕсемпе аякран янă çырусем ыйтăвĕсемпе те, таметикипе те питĕ анлă. Республикăри, çĕршыври кирек мĕнле вырăн та, тĕнчери халиччен илтмен çĕршыв е хула–ял та çулçӳрев очеркĕнче вырăн тупма пултарать. Чылай чухне вĕсенче публицистикăлла тĕп туртăмсем палăрса тăраççĕ. Ытахаллĕн çеç, курнине фотографилесе илнĕ пек çеç, чун витĕр кăлармасăр çырасси 70–мĕш çулсенчи чăваш публицистикинче майĕпен пĕтсе пынă пулин те çак пулăм паян та çирĕп тымарлă–ха.

Çыравçăсен тĕллевĕ - интереслĕ, илемлĕ, ĕнентерӳллĕ çырса кăтартасси. Журналистăн ĕçри, профессиллĕ пултарулăхĕнче чи кирлĕ енсем тесе эпир çыравçă çĕршыв тĕллевĕсене пурнăçлассине мала хунине, принциплăха, ĕçе тĕплĕн пĕлнине, пурнăçри пулăмсене тишкерме пĕлни, пултарни тесе палăртатпăр. Çыравçăн çак енĕсем пур енлĕн аталаннă пулсан та - никам вуламан, никама та интереслентермен материал çырма та пулать–çке–ха. Тĕрĕссипе, ун пек материалсем пичетре час–часах курăнкалаççĕ. Вĕсем вулакан асĕнче нимĕнле йĕр те хăвармаççĕ. Паллах, вулакана кичем те тĕссĕр çырнă япаласемпе лăплантарма та, илĕртме те çук. Пысăк ăсталăхпа çырнă хайлавсем анчах вулакан чунне çатăрласа ярса илме пултараççĕ, калас шухăша вулакан патне çитерме çул уçса параççĕ. Апла пулсан эпир ăсталăх ыйтăвĕ патне пырса тухрăмăр.

Мĕн–ха вăл ăсталăх? Ăста çыравçă, ăста журналист пулма хăвăн ĕçне юратни, пурнăç опычĕ пулни çеç çителĕклĕ–ши? Ăсталăх çинчен калаçни - курма, илтме, фактсемпе пулăмсене тĕрĕс ăнланма пĕлни, вĕсене тĕрĕс хакласа, ун çинчен вулакана тĕрĕс, ăнланмалла каласа парасси пирки калаçнипе тӳр килет.

В. Долгов критик хайлав çырас ăсталăхпа талант пирки çапла çырнăччĕ. "Ăсталăх вăл произведенире çĕнĕ те вăйлă шухăш калас тесе, тăван чĕлхен мĕнпур хăвачĕпе усă курма тăрăшни, çĕнĕ кĕвĕсем, тĕссем шыраса тупни, ку вăхăтчен никам курман сăнлăхсем туни, çыннăн чун–чĕрине хускатса яракан, кăмăлĕпе çунат паракан ырă сисĕм–туйăма çуратма пĕлни. Талант вăл - хăй тĕллĕн килекен япала мар, халăха, обществăна кирлĕ ĕçре пăлăраканн пысăкран та пысăк пултарулăх, çыннăн пĕтĕм вăй–халне, ăс–хакăлне, пĕлĕвне, ăсталăхне ĕçе яма пултаракан хăват".

Журналистикăна пайăррăн илес пулсан чăн–чăн ăсталăх палли çыравçă кашни материалтах хăйĕн шухăш–кăмăлне туллин палăртнинче те аван сисĕнет. Автор хăйĕн курăмне хĕрӳллĕн хӳтĕлени, пурнăç çине хăйне тивĕçлĕ куçпа пăхасси те ăсталăхăн палăрăмех. Кичеммĕн çеç фактсене каласа кайни, хăйне евĕрлĕ статист çеç пулни авторăн професилле ăсталăхĕ çителĕксĕррине тӳрех кăтартать. Пичетре час–часах шухăш ирĕклĕхне, творчествăлла хăйенлĕхпе публицистикăллăха хавшатакан штамппа шаблон çинчен те асăнса хăвармалла.

Штамп пичетре тĕрлĕ енлĕн палăрать: нумай чухне вулаканшăн, халăхшăн ним чухлĕ те çĕнĕ мар япаласем çинчен "каласа пани", йĕркеллĕ, уçăмлă каласа, кăтартса парас вырăнне сăмаха пустуях тăсса кайни. Калас пулать, хальхи вăхăтра, хăвăртах мар пулин те, фотографла çырасси, штампсемпе усă курасси чăваш публицистикинче майĕпен пĕтсе пы-

рать.

Портрет–очерксем çырнă чухне чылай автор пĕр–пĕр интереслĕ çыннăн биографине вулакан умне йăлтах кăларса тăратма тăрăшать, унăн кунçулĕнчи чи характерлă, чи кăсăклă вырăнне суйласа илсе çырса кăтартмасть. Кун пек чухне вара, паллах, очерка вулама кичем. Пĕр енчен - очерк геройĕн пĕтĕм пурнăçĕ вулаканшăн кăсăклă мар, тепĕр енчен - хăйлав калăпăшĕ шутсăр ӳссе каять. Паянхи пурнăç нумай енчен интереслĕ, тĕрлĕрен фактсемпе пуян. Кирек мĕнле тĕрленчĕк те, фельетон та, очерк та пурнăç илемне, пуянлăхне çав штампăн хĕсĕк картине "çапса кĕртмесен" илемлĕ те кăсăклă пулмалла. Апла пултăр тесен журналистăн хăй çыракан текстра пурнăçра сăнанине, хăй кăмăлĕн пайăркисене палăртса хăвармалла. Кашни çыравçах пурнăçра çĕннине, интереслине, характерлине шыраса тупса унпа вулакана паллаштарсан çеç вăл уншăн интереслĕ, кĕтнĕ япала пулĕ. Тĕрĕссипе, хаçат–журнала алла илнĕ вулакан чи малтанах материалăн ятне асăрхать. Тӳрех каламалла, заголовок илĕртӳллĕн, кĕске те илемлĕ пулмалла. Вăл хайлавăн содержанийĕпе, идейипе пĕр килмелле, вĕсене пур енлĕн уçса пама пултармалла. Шел пулин те, хăшпĕр авторсем нумай шутласа тăмасăрах хăйсен материалĕсене тахçанах штампа тухнă ятсем параççĕ: Тĕслĕхшĕн, пичетре час–часах тĕл пулаканнисенчен хăш–пĕрисене çеç асăнар: "Вĕри чĕреллĕ çын", "Ылтăн алăллă çын", "Телейлĕ çын", "Вуннăмĕш çуркунне", "Çиччĕмĕш кĕркунне", "Уй тӳпинче", "Уй вĕçĕнче", "Уй варринче" т.ыт.те. Авантарах шутланă, кăштах тăрăшнă пулсан хитререх заголовоксем те тупма пулатчĕ. Пичетре кун пек тĕслĕхсем чылаях тĕл пулаççĕ. Пайăррăн илес пулсан çав çулсенче "Коммунизм ялавĕ" хаçатра пичетленнисенчен çаксене палăртма пулать: "Туслăх илемĕ", "Таса çăлкуç" (Чăваш театрĕн кунçулĕ çинчен), "Ытарайми

çынсем", "Чун туртăмĕ", "Çăлтăрлă çул", «(Социализмла Ĕç Геройĕ çинчен)», "Хурçă никĕс", "Çĕрĕç чысĕ", "Чĕмпĕр чĕкеçĕ" (ватă учительница çинчен) т.ыт.те. Схема çинчен калаçнă май çакна та асăнса хăвармалла. 70–мĕш çулсенче пичетленнĕ хăшпĕр очерксем ытла та пĕрешкел. Ун пек хайлавсенче автор чăн малтанах хăй çырса кăтартакан вырăна мĕнле çитни, çынсемпе паллашни çинчен çырать. Е тата пĕр–пĕр авторăн очеркĕсем пурте тенĕ пекех пĕрешкел пуçланса каяççĕ. Калăпăр, Иванов е Петров çырнă материала пĕр–икĕ абзац вуласанах авторĕ кам иккенне туйса илме пулать. Çакă вăл ĕнтĕ схематика чирĕ.

Журналист ĕçĕнче ăнăнçлăх тăрăшмасăр, ăс–тăн вăйне хумасăр пулмасть. Очерк çырнă чухне чи кирли фактсемпе пулăмсене анализлеме пĕлнипе пĕрлех авторăн чĕлхе ăсталăхĕ те пысăк вырăн йышăнать. Сăмах вăл яланах - пур фактсен, пур шухăшсен тумтирĕ, вĕсене сăн кĕртекенĕ.

Пурнăçран илнĕ фактсен тупсăмне, пĕлтерĕшне туллин те уççăн сăпатласа пама чат тĕрĕс те илемлĕ чĕлхе, тĕплĕ суйласа илнĕ вырăнлă сăмах кирлĕ. Çĕнĕ шухăша, халиччен никам курманнине чĕлхен мĕнпур пуянлăхĕпе усă курса, чĕлхе саккунĕсене, мелне пăхăнса каласа парсан çеç вăл вулаканăн чĕринче вут хыптарĕ.

Ăста очеркистăн пурнăçри улшăнусене вăхăтра асăрхама, вĕсене тĕрĕс, илĕртӳллĕ çырса кăтартма пĕлес пулать. Паянхи куна илес пулсан та очеркистсен ĕçре малта пыракан паттăр та хастар çынсем çинчен лайăх хайлавсем çырассине мала хумалла. Вĕсен мухтавлă ĕçне–хĕлне, чун–чĕрине уçса кăтартасси - публицистсен, илемлĕ очерк çыракансен таса тивĕçĕ. Çак ĕçе писательсене те анлăрах явăçтармалла. Хаçат–журналсенче публицистикăлла илемлĕ очерксем ытларах пичетлемелле. Пултаруллă, маттур çынсен лайăх ĕçĕсемпе вĕсен ăс–хакăлĕнчи

ырă улшăнусем çинчен каласа кăтартнипе пĕрлех ӳсĕм çулĕ çинчи çитменлĕхсем çинчен те манмалла мар. Халăх хушшинче саккуна пăсакансем те, ултавçăсемпе вăрă–хурахсем те пур–ха. Вĕсене хаçат–журнал урлă "Йĕплĕ çăмахпа" та сахалтарах хăналаççĕ паян. Çĕнĕрен те çĕнĕ вăрçă хускатасшăн вĕтеленсе çӳрекен тискер вăйсем те пĕтмен–ха. Публицистсен çавăн пек усалсен чăн–чăн ĕмĕт–шухăшне тăрă шыв çине кăларма тăрăшмалла. Çак ĕçри чи çивĕч те шанчăклă хĕç–пăшал та - фельетонпа памфлет, сисĕнмеллех мăкалчĕç. Тĕрлĕ сăлтавсене пула вĕсем хаçатсенче сисĕнмеллех сайралчĕç.

Эпир пăхса тухакан çулсенчи чăваш очеркĕн лайăх енĕсенчен пĕри - унăн тематики сарăлни, унччен пачах тивмен е тивĕçлипе çутатман çĕнĕ ыйтусене хускатма тăрăшни.

Çапах та, чăваш очеркĕсенче çивĕчлĕхпе хастарлăх çителĕксĕр. Тарăн тĕпчевлĕ, çивĕч ыйту лартакан, мораль ыйтăвĕсене çивĕч хускатакан очерксем сахал тĕл пулаççĕ. Я.Ухсай 70–мĕш çулсем пуçламăшĕнчех Атăл хĕрринчи колхозсен уй–хирĕнче тăпра çийĕнсе ишĕлнине чарасси çинчен, Атăла варalанине хирĕç кĕрешесси çинчен хĕрӳллĕ публицистикăлла статьясемпе очерксем çыратчĕ. Хăшпĕр журналистсем (П. Иванов, И. Михайлов) унăн пуçарăвне хапăлларĕç, ку темăпа самаях çырчĕç. Етĕрне районĕнчи "Ленинская искра" колхоз ĕçĕ çинчен кĕнеке те кăларчĕç. Сăмах май, И. Михайлова çак ĕçсемшĕн 1977 çулта чăваш журналисчĕсен С.В. Элкер ячĕпе хисепленекен премине панăччĕ. Паян та ял культурин çивĕч ыйтăвĕсене, наука лабораторийĕн ĕçĕсене, çĕрпе вăрман, шывпа сывлăш ырлăхĕсене упрассине самантлăха та манмалла мар. Шел, ку чухнехи очеркистсем хушшинче çав пархатарлă ĕçе малалла тăсакансем сахалрах–ха. Ку чухнехи очерк наукăпа гуманизма тачă пĕтĕçтерĕрччĕ.

Паянхи чăваш илемлĕ публицистики çинчен ка-

лаçу пуçартăмăр пулсан вăл хăйĕн тĕп тĕллевне - халăхăн хальхи пурнăçне, çĕршыври йывăр лару–тăрăва тарăн та пултаруллă, илемлĕх енчен селĕм те ăста сăнлассине пурнăçласа пырать–и–ха( Эпир пăхса тухакан 70–мĕш çулсемпе танлаштарсан, пулăмсене анлăн пĕтĕмлетсе, пурнăça пур енлĕн сăнласа парас туртăм вăйланса е йăшса пырать( Çак ыйтусене пайăррăн пăхса тухса татса парасси паянхи литература тĕпчевçисен тĕллевĕсенчен пĕри пулмалла.

70–мĕш çулсенче республика ялхуçалăх никĕсĕнчен промышленность енне питĕ хăвăрт куçса пычĕ. Ку Чăваш республикишĕн, республикăмăрта пурăнакан халăхсемшĕн калама çук пысăк та анлă улшăну пулса тăчĕ. Шăпах çав çулсенче Чăваш çĕршывĕ Совет Союзĕн индустриллĕ облаçĕсен хисепне кĕчĕ. Республикăра хими, пир–авăр, электричество, трактор туса кăларасси, самолет пирборĕсем кăларасси тата ытти те пысăк вăй илчĕç. Чăвашра та рабочи класăн йышлă кадрĕсем çитĕнсе çитрĕç. Халăх пурнăçĕнчи паллă улшăнусене публицистика, уйрăмах илемлĕ очерк вăхăтра курма, асăрхама сăнласа пама тăрăшрĕ. Анчах та çакăнпа çыхăннă экологи, экономика, мораль хирĕçлĕхĕсене çав çулсенче çеç мар, 80-90–мĕш çулсенче те çĕнетӳ куçĕпе тишкереймерĕ.

70–мĕш çулсенче Чăваш писателĕсен союзĕн правленийĕпе трактор заводне тăвакансем тачă çыхăну тытнине маларах асăннăччĕ ĕнтĕ. "Ялавпа" "Тăван Атăл" журналсем Тракторстрой площадкинче писатель посчĕсене йĕркеленĕ пулнă. Унтах "Литературная Россия" тата "Комсомольская правда" хаçатсен посчĕсем те ĕçленĕ. Вĕсем вулакана тракторостройра вăй хуракан нумай нациллĕ коллектив пурнăçĕпе тата ĕçĕпе аван паллаштараççĕ.

Чăваш писателĕсен Союзĕпе журналистсен Союзĕн правленийĕсем çав çулсенче литераторсемпе

публицистсен ырă пуçарăвне пур енлĕн пулăшса тăраççĕ. "Ялавпа" "Тăван Атăл" журналсенче, "Советская Чувашия", "Коммунизм ялавĕ", "Молодой коммунист" хаçатсенче çак пысăк стройка çинчен очерксем час–часах пичетленеççĕ.

"Литературная Россия" хаçат Тракторостроя шефа илнĕ. Ун страницисенче улăп завод, ăна тăвакансем çинчен А. Талвир, Р.Коваленко, Я. Мустафин, Юхма Мишши, И. Григорьев, Ю. Грибов çырнă очерксем чылай пичетленчĕç.

Тракторострой çинчен сахал мар публицистика кĕнеки тухрĕ. Юрий Князев журналист "Гигант на Волге" В. Иванова "Юность Тракторостроя", Юхма Мишши "Чебоксарский богатырь", М. Каминский "Волшебный конь Сурная", "Тракторострой - тăван кил" ятсемпе очерк кĕнекисем кăларчĕç. "Гигант на Волге" кĕнекешĕн Ю. Князева республикăри журналистсен С.В. Элкер ячĕпе хисепленекен премине пачĕç. Чăваш халăх писателĕ, Юхма Мишши ăста очерксем хайлама пултарнипе 60–мĕш çулсен пуçламăшĕнчех аван палăрнăччĕ. 1972 çулта Шупашкарта улăп–трактор кăларакан завод тума пуçласан вăл унта час–часах пулчĕ. Çав объекта хăпартакан строительсемпе унта ĕçлекен рабочисем çинчен илемлĕ очерксем вăл чылай çырчĕ. Мускавра унăн "Чебоксарский богатырь", Шупашкарта вара вăл пухса хатĕрленĕ "Тракторострой çути", "Тракторострой - тăван кил" ятлă очерксен кĕнекисем пичетленчĕç. Юхма çав çулсенче çырнă нумай–нумай очерка паянхи куçпа пăхсан вĕсене чăнах та тракторостройăн илемлĕ летопиçĕ тесех хаклама май пур. Сăмах май каласан Юхма Мишшине çак аслă стройкăра вăй хуракансем "Хисеплĕ тракторостроец" ят пани вăл хăех çыравçă çĕнĕ завода çĕкленине, унăн пĕрремĕш утăмĕсене пичетре çутатса парас ĕçре ырми–канми вăй хунине йышăнни. Ĕçчен çыравçă рабочисен коллективĕсемпе туслă çыхăну тытнă. Вăл

унта хӑй те пӗр хушӑ инженерта ӗҫленӗ, ҫавӑнпах ӗнтӗ унӑн илемлӗ очеркӗсем аслӑ стройка тӗнчине, унта ӗҫлекен ҫынсен чунне ӗненмелле, шалтан, ӗҫ йӗрки–майне пӗлсе уҫса параҫҫӗ. Юхма Мишшин очеркӗсене вулакансем чӗрене ҫывӑх, хапӑл туса йышӑнчӗҫ.

Ҫак аслӑ стройкӑра ӗҫлекенсем ҫинчен очерксем ҫырас ӗҫе чӑваш писателӗсемпе журналисчӗсенчен чылайӑшӗ хутшӑнчӗҫ вӑл ҫулсенче.

Ҫапла ӗнтӗ, 70–мӗш ҫулсенче чӑваш илемлӗ публицистикипе илемлӗ очеркӗ ҫӗнӗ темӑсене хускатать. Шӑпах ҫак тапхӑрта чӑваш очеркӗ пӗтӗм Союз трибуни умне тухать, 20-60–мӗш ҫулсенчи ӑнӑнҫлӑ утӑмсем ҫумне ҫӗнӗ пусӑмсем хушать. Пӗтӗмӗшле илсен эпир тишкернӗ ҫулсенче чӑваш илемлӗ публицистики, уйрӑмах очерк, паха тӗслӗхсем ҫуратрӗ. Вӗсене пӗтӗмлетсе теори картине тытасси - тӗпчевҫӗсен паянхи ӗҫӗ. Теори никӗсне тарӑнлатма та вӑхӑт ҫитрӗ. Илемлӗ публицистика историйӗ пуян, тишкермелли тӗслӗхсем нумай. Апла пулсан, эпир хускатнӑ ыйтусем малашне тӗплӗ хурав тупма тивӗҫ.

Ҫакна та палӑртмалла - хальхи вӑхӑтра илемлӗ литературӑн эстетика, этика, ӑс–хакӑл, кӑмӑл–сипет воспитанийӗнчи пӗлтерӗшӗ нумай хут ӳсрӗ. Ҫак предметӑн программа тытӑмӗпе содержанийӗ чылай ҫӗнелчӗ. Чӑваш литературипе те ятарлӑ Патшалӑх стандарчӗ пичетлесе кӑларнӑ. Шел пулин те, ҫӗнӗрен хатӗрленӗ методика кӑтартӑвӗсем пачах ҫук. Ҫавна пула учительсен илемлӗ литература аталанӑвӗнчи нумай пулӑмсене, туртӑмсене харпӑр хӑй тӗллӗн тишкерме, ачасене ӑнлантарма тивет. Апла пулсан, паянхи ҫивӗч те витӗмлӗ публицистика жанрӗсене вӗсен, хӑйсен студент ҫулӗсенчех аван пӗлмелле. Учителе тухсан та, илемлӗ литературӑна вӗрентес ӗҫе пурнӑҫпа тачӑ ҫыхӑнтарма, чи лайӑх очерксемпе паллашсах тӑмалла, вӗренекенсене те ҫак ӗҫе хӑнӑх-

тармалла.
Пулас журналистсен вара чăваш очеркĕ утса тухнă çул–йĕре тĕплĕн пĕлесси професси тивĕçĕ.

Научное издание

**Пушкин Василий Николаевич**

**Чувашский очерк (на чувашском языке)**

Чувашский республиканский институт образования
г.Чебоксары, пр-т М.Горького, 5

Ответственный за выпуск:
А.П.Никитин

Типография ООО «Атолл»
428003, г. Чебоксары, Школьный пр-д, 1. Лиц. ПЛД 27-66
подписано к печати 24.02.04. Бумага газетная. Печать оперативная.
Формат 60 x 84 / 16. Уч. – изд. л. 4,3
Тираж 500 экз. Заказ № 58